Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
12
ШАМАТКУН
58 (4871)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Вăрман хатĕрлевĕнчи ответлă тапхăр

Вăрман хатĕрлевĕнче иртнĕ стахановла уйăхлăхра вăрман касакансемпе турттаракансем, шоферсем, тракториссем хушшинчен çĕршер стахановецсем ÿссе палăрчĕç. Стахановла уйăхлăха хутшăнса пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçленĕ май, вăрманти нумай рабочисем, чылай колхозсем пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕ.

Акăшкÿлти механизациленĕ çул çинче ĕçлекен тракторис Константин Ластухин йулташ нормăна 214 процент тултарса пынă. Çавăн пекех тракторис Петр Сорокин йулташ куллен 270 кубла метр турттарса, нормăна 140 процент тултарнă. Çĕмĕрле вăрман-пунктĕнчи вăрман касакан И. Висарйев нормăна йалан 250 процент, Улатăр вăрманпромхозĕнчи Богданов йулташ вăрман касас плана 185 процент тултарса пынă.

Вăрман хатĕрлевĕнче пысăк тĕслĕхсем кăтартнă колхозсем те сахал мар. Шăнкăртам районĕнчи „Ударник“ колхозăн Кисйаков йулташ йертсе цыракан бригади нормăна куллен 200-шер процент тултарса ĕçленĕ. Бригадă членĕсем кунсерен 28-шер тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Çак районри „Звезда“ колхоз членĕ Йумашев йулташ хатĕрлес плана 242 процент тултарса пынă. Çавăн пекех Трак районĕнчи „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз та ĕçре пысăк ÿсĕмсем тунă.

Кăтартнă тĕслĕхсем пирĕн республикри вăрманпромхозсен, механизациленĕ вăрманпункчĕсен, тракторла-авто çулсен хăйсен планĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма кирлĕ условисем çителĕклĕ пулни çинчен кăтартса парaççĕ. Анчах та вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсем çав условисемпе кирлĕ пек усă курман, пĕтĕм ĕçе массăпа çыхăнса тăни тăрăх организацилемен, ĕçре çирĕп йĕрке тăвассишĕн тăрăшман, рабочисене ĕçлеме, пурăнма условисем туса парасси çине çителĕксĕр пăхнă. Çавна пула ĕнтĕ Чăваш вăрманпром тăрăх стахановла уйăхлăх планне хатĕрлессине 24,4 процент, турттарассипе 24,8 процент çеç тултарнă. Кире вăрманпункчĕпе Йĕпреç вăрманпромхозĕ стахановла уйăхлăхри турттарас плана 20 процент та тултарайман.

Ку фактсем ĕнтĕ вăрманпром, вăрманпромхозсен руководителĕсем ПСК(б)Парти Тĕпкомĕ „Мускавпа Мускав облăçĕнчи фабриксемпе заводсенчи стахановецсем чĕнсе калани“ пирки йышăннă постановленире массăлă стахановла йухăма вăйлатма кăтартса панине ăнланса илменни çинчен калаççĕ.

Чăваш вăрманпром, вăрманпромхозсен руководителĕсем хушшинче „районсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ памаççĕ“ тесе лăпланса ларасси хытă сарăлнă. „Ĕç вăйĕ çитмест“ тенипе витĕнсе вăрманти кадрсем хушшинче ĕçлессине, механисăмсемпе усă курассине сÿрĕклетнĕ, суту-илÿ ĕçне йăвашлатнă. Вăрнар вăрманпромхозĕн Канаш участкинче, çавнашкалах Йĕпреç вăрманпромхозĕнче суту-илÿ ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Çĕмĕрлери, Йĕпреçри механизациленĕ çулсем çинче тракторсемпе, автомобилсемпе туллин усă курмаççĕ. Вăрманта йалан ĕçлекен кадрсенчен çуррине йахăн вăрман касса хатĕрленĕ тата турттарнă çĕрте ĕçлемеççĕ. Ку тĕлĕшпе Йĕпреçпе Улатăр вăрманпромхозĕсем уйрăмăнах палăраççĕ.

Стахановла йухăма кунсерен вăйлатса пырас тĕлĕшпе вăрманпромхоз руководителĕсем те, партипе профсойуз организацисем те тимлĕн кĕрешме пуçăнман.

Çурхи кунсем çывхарса çитрĕç. Пĕрремĕш квартал планне тултарма шутлă кунсем çеç йулчĕç. Çулсем пăсăличчен вăрманхатĕрлевне кайа йулса пынинчен кăларма чи малтанах вăрман организацисен пур сыпăкĕсенче те руководствă ĕçне çĕнетсе йĕркелемеле. Чăваш вăрманпромăн хăйĕн ĕçне вăрманпромхозсемпе, вăрманпункчĕсемпе, çавăн пекех вăрманпромхозсен хăйсен ĕçне колхозсемпе таччăн çыхăнса туса пымала. Вăрманта йаланах ĕçлекен кадрсемпе вăрман каснă тата турттарнă çĕрте лайăх усă курмала. Механисăмсемпе туллин усă курассишĕн трактористсемпе шоферсем хушшинче чăнчăн социалисăмлă ăмăртăва пуçармала, массăлă стахановла йухăм сарса йамала. Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсен вăрман хатĕрлев планне тултарманнине касаракан нимĕнле сăлтавсем те çуккине йаланах асра тытмала.

Вăрман хатĕрлевĕн квартал планне тултарма вăрманта кулленех 6060 çын çуран тата 6430 çын лашапа ĕçлемеле. Анчах мартăн 9-мĕшĕнчи сведенисем вăрманти ĕç вăйĕ çителĕксĕррине кăтартса параççĕ: мĕн пурĕ те 1347 çын çуран тата 1386 çын лашапа ĕçленĕ. Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен организацисен ĕç вăйĕ мобилизацилессине тивĕçлĕ вырăна лартмала.

Парти райкомĕсен, райĕçтăвкомĕсен массăлă-агитаци ĕçне анлăн сарса пыни тăрăх колхозниксене тата йединоличниксене вăрман хатĕрлев планне срукра тултарассишĕн кĕрешме организацилемеле.

Пĕтĕм çĕршыв ирсĕр шпионсемпе çынвĕлеренсене персе пăрахма ыйтать

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесне пĕтĕм совет çĕршывĕ калама çук пысăк тимлĕхпе сăнаса тăрать. Пиншер митингсемпе пухусенче Совет халăхĕ ирсĕр сутăнчăксемпе изменниксене—тăван çĕршыва сутса пурăннă, социалисăмăн аслă çĕршывне çĕмĕрсе тăкма хатĕрленнĕ, ĕççыннисен мăйĕ çине çĕрулпучĕсемпе капиталиссен пусмăрне тăхăнтарма хăтланнă ирсĕрсене намăспа питлет. Фашисла шпионсемпе çынвĕлеренсен процесра уçса панă тĕлĕнмеле ирсĕр усал ĕçĕсем совет халăхĕн хăйар çиллинĕ çĕклерĕ, Совет халăхĕ капиталисăмăн урнă йыттисен ушкăнне пĕтерме, персе пăрахма ыйтать.

„Епĕр хамăрăн тăван Совет çĕрĕ çине çĕрулпучĕсемпе капиталиссене нихăçан та кĕртес çук,—теççĕ Азербайджан ССРеспубликĕнчи Норашенск районĕнчи Йежов йачĕпе тăракан ертел колхозникĕсем.—Хăйсен йунлă аллисене хамăр тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсем çине—С. М. Киров, В. В. Куйбышев, В. Р. Менжинский, М. Горький çине çĕкленĕ фашисла шпионсене, диверсантсене, çынвĕлеренсене тĕп тума ыйтатпăр“.

„Бухарин, Рыков тата вĕсен ушкăнĕнче пулнисем кăтартса панă тăрăх,—тесе çыраççĕ Тула облăçĕнчи Белейевск районĕнчи Ворошилов йачĕпе тăракан ертел колхозникĕсем,—сылтăмрисем, троцкиссем, ес-ерсем, кулаксем тата ытти тĕрлĕ варлăнчăксем колхозсене çĕмĕрсе тăкма, пирĕн колхозниксен телейлĕ пурнăçне турттса илме, çĕрулпучĕсем пуç пулса тăрассине кайала таврăрма хăтланнă. Епĕр ССРС Верховнăй Сучĕн Çар Коллегинчен сутăнчăксен, шпионсен, сăтăрçăсен, диверсантсен сылтăмла-троцкисла бандине петĕмĕшпех пĕтерме, тĕп тума ыйтатпăр“.

„Троцкисла-бухаринла ирсĕрсем Совет халăхĕ мĕн кĕрешсе илнисене, Сталинлă Аслă Конституци çине çырса хунисене пĕтĕмпех турттса илесшĕн пулнă,—теççĕ хăйсен резолюцинче Калиновский йачĕпе тăракан чăçри боецсемпе командирсем тата политработниксем.—Йанăшрĕç, çĕлен-калтасам! Совет Сойузĕнчи телейлĕ халăхсен, хамăр партипе правителствă тавра, аслă Сталин тавра таччăн пĕрлешсе пĕтĕçсе тăракан телейлĕ халăхсен тăванлă сойузне никам та, нихăçан та çĕмĕрме пултарас çук“.

Троцкисла бандăсем 1936 çулхи çентабĕрте Кемеровăри тĕп шахтăна сиктерсе йанă чух вилнисемпе инкек курнисен çемйисем ССР Сойузĕн прокурорĕ Вышинский йулташ патне йанă çырура çапла çыраççĕ: „Ирсĕр преступниксем Бухарин, Рыков, Йагода тата ытти бандитсем пирĕн упăшкасемпе ывăлсен вилĕмĕшĕн айăплă. Вĕсем епĕр сывлăхсăр тăрса йулнăшăн айăплă. Епĕр сире, Андре Йануарйевич, хăвăр сăмахăрта çакна шута илме ыйтатпăр, есĕр ССРС Верховнăй Судĕнчен çав бандитсене пурне те пĕр çын йулмиччĕнех персе пăрахмала тума ыйтăр. Вĕсем çинче пирĕн упăшкасен йунĕ. Тăван çĕршыва сутакансене çĕр пичĕ çинчен шăлса ывăтмала“.

(ТАСС).

Йутçĕршывсенчи пичет совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ çинчен

Йутçĕршывсенчи пичет Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ çинчен малтанхи пекех нумай çырать. Францири хаçатсенчен нумайĕшĕ процес çинчен тĕплĕ отчотсем пичетлесе пыраççĕ. Францири компарти органĕ „Йуманите“ хаçат çапла çырать: „Культурă интересĕсем, çавăн пекех ирĕклĕхпе лăпкă самана интересĕсем преступниксене хăйаррăн айăпламa ыйтаççĕ“. Хаçат çакна паллă тăвать: сылтăмла-троцкисла бандитсен Совет халăхĕн массисенче нимĕнле тĕрек те пулман, халăх вăл бандăна калама çук кураймасть, ун çине йĕрĕнсе пăхать, тет.

Швеци хаçачĕсем процес çинчен анлă отчотсем пичетлесе пыраççĕ. „Свенска дагебладет“ хаçат çапла çырать: „Йагода хăйĕн çĕршывне йутçĕршывсенчи тăшмансене сутнă, хĕçпăшаллă восстани тата переворот тума шухăшласа хунă, халиччен никам илтмен сутăнчăклă ĕç тунă, Совет Сойузĕн тăшманĕсене пулăшса тăнă, Совет Сойузĕн йутçĕршыври тăшманĕсене укçа-тенкĕ йарса панă, çынсене вĕлерессине организациленĕ“.

(ТАСС).

Тăшмансене пĕтĕм халăх ылханать

„Сылтăмла-троцкисла блок“ йатлă заговорла ушкăна суд тума пуçланине пĕлсен, вăл ирсĕр тăшмансене пĕтĕм халăх тăрăхса ылханать. Пур çĕрте те пухусем, митингсем пулса иртеççĕ.

Ишлей районĕнчи „Мотор“ колхозри колхозниксем хăйсен пухувĕнче çапла йышăннă: „Совет Сойузне йутçĕршывсене сутма хăтланнă тăшмансене тĕппипех пĕтермеле! Епĕр вĕсене пурне те персе пăрахма ыйтатпăр“.

Çавнашкал митингсем Шупашкарти педрабфакра, кооптехникумра, Куславкка районĕнчи вăтам шкулта, Елĕк районĕнчи Йуçкассинчи вăтам шкулта, Ишлей районĕнчи Ишекри вăтам шкулта, Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта пулса иртнĕ. Учителсемпе вĕренекенсем хăйсен митингĕсенче тăшмансене персе пăрахма ыйтаççĕ, тăшмансен ирсĕр ĕçĕсене ответлесе „отлично“ вĕренме пулаççĕ.

Вĕсене вĕçĕмсĕр тарăхатпăр

Тутаркас. Мартăн 10-мĕшĕнче машинă-тракторлă станцинче ĕçлекенсен митингĕ пулса иртрĕ. Унта 117 çын пулчĕ.

„Сылтăмла-троцкисла блокăн“ ирсĕр ĕçĕсем çинчен сÿтсе-йавнă хыççăн, 117 çынлă митинг, Фашисла государствăсене сутăннă ирсĕр бандитсем çине вĕçĕмсĕр тарăхса, çакăн пек резолюци йышăнчĕ:

„Епĕр йĕрĕнчĕк тискер кайăксене, хамăрăн ирĕклĕ тăвакан çĕршыва сутма нихăçан та ирĕк парас çук. Фашисла бандăсене нимĕнле касару та пулма пултараймасть. Вĕсене персе пăрахма ыйтатпăр.“

Исайев.

Персе пăрахма ыйтатпăр

Патăрйелĕнчи (Çĕрпÿ районĕ) „Богатырь“ колхозри колхозниксем, ССР Сойузĕн Прокуратури халăх тăшманĕсем—Бухарин, Рыков, Йагода, Чернов, Гринько тата ыттисем пирки те следстви туса пĕтерсе вĕсен ĕçне ССР Сойуз Верховнăй судĕнче пăхса тухма панине хаçатсем урлă пĕлсенех, митинг туса иртерчĕç. Митингра колхозниксем пĕр сасăпах халăх тăшманĕсене персе пăрахма ыйтрĕç. „Йытăсене—йытă вилĕмĕ“, теççĕ колхозниксем.

Абашев.

Ленин-Сталин партийĕ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçер“

(Аслă Йелчĕкри колхозниксен митингĕнче йышăннă резолюцирен)

Кирек мĕнле ирсĕрлĕхпе йĕрĕнчĕке те тума именсе тăман бандитсем: Бухарин, Рыков, Кретсинский, Йагода т. ыт. пирĕн ирĕклĕ савăнăçлă пурнăçпа суту-илÿ тунă, Совет Сойузне фашиссен аллине парасшăн пулнă. Епĕр, колхозниксем, çак ирсĕр бандитсене Ленин—Сталин партийĕ тавра тата çирĕпрех пĕтĕçнипе, государствă умĕнче тăракан парăмсене срукченех парса татнипе тата çуракине большевикла хатĕрленсе тухнипе ответлетпĕр.

Тăшмансене нимĕнле касару та çук

Улатăрти Вăрман-техникă рабфакĕнче вĕренекенсемпе вĕрентекенсем „сылтăмла-троцкисла блок“ йатлă çынвĕлеренсен ушкăнĕнчи бандитсем хăйсен йунлă аллисемпе пирĕн йуратнă руководителсене вĕлернине тата вĕсен ытти ирсĕр ĕçĕсене ылханса „Тăшмансене нимĕнле касару та пулмала мар, вĕсене пĕр çын хăвармиччен персе вĕлермеле“ тесе резолюци йышăннă.

В. Севрÿгин.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Мартăн 4-мĕшĕнчи касхи лару

Айăпланакан Раковскине допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Раковский, малтан следстви тунă чух хăвăр кăтартса панисене есĕр çирĕплететтĕр-и?

Раковский. Пĕтĕмпех çирĕплететĕп.

Вышинский. Айăпланакан Раковский, калăр-ха кĕскен, çак ĕçпе хăвăра мĕнле айăплă тесе йышăнаттăр?

Раковский. 1932 çулта, çулла, Новосибирск урлă пуйăспа иртнĕ чухне, епĕ Н. И. Мураловпа курнăçрăм. Вăл мана çапла каларĕ: Троцкирен çĕнĕ-террорла кĕрешÿ меточĕсем çине куçасси çинчен кăтартса панисене илтĕмĕр. Троцкий çапла кăтартса панă: оппозицине çĕмĕрсе аркатнă хыççăн, кĕрешÿн кивĕ меточĕсем влаçа туртса илесси патне илсе пымаççĕ.—тенĕ.

Пĕр çул çурă иртсен, 1934 çулхи февральте епĕ: идейă тĕлĕшĕнчен те тата организацилĕх тĕлĕшпе те пĕтĕмпех хĕçпăшалсăрлантăм, çавăнпа мана партине кайала илме ыйтатăп, тесе ПСК(б)П Тĕпкомне телеграммă патăм. Ку телеграммă чĕререн çунса панăскер пулман, епĕ суйнă. Епĕ партинчен те тата государствăран та хам 1924 çултанпах „Интеллидженс Сервиспа“ çыхăнса тăнине, Троцкий 1926 çултанпах „Интеллидженс Сервиспа“ çыхăнса тăнине пытарма хăтлантăм, çавăн пекех тата епĕ 1932 çулта Мураловпа калаçнине те пытарасшăн пулнă.

Май уйăхĕнче Мускава килсен, епĕ Сосновскийпе тĕл пултăм. Сосновский мана çапла пĕлтерчĕ: кивĕ троцкисла оппозицин руководителĕсем пулнисем активлăн пытанса ĕçлес ĕçе хаĵ çĕнĕрен тытăнаççĕ,—терĕ.

1934 çулхи ийулĕн иккĕмĕш çурринче Троцкирен çыру илтĕм. Вăл хăйĕн çырувĕнче мана хамăн йутçĕршывсенчи политикăла, пуринчен ытла „сулахай“ текен етемсемпе анлăн çыхăнса тăнипе усă курма ыйтса çырнă. Çак кăтартусен шухăшне епĕ çапла ăнлантăм: Совет Сойузне хирĕç капиталисăмлă агрессине çирĕплетмеле тата ăна вăйлатма кирлĕ. Епĕ çак сĕнÿпе килĕшрĕм. Çак вăхăтран вара епĕ ĕнтĕ икĕ урапах троцкисăм позицийĕсенче тăратăп.

1934 çулхи çентабĕр уйăхĕнче мана совет Хĕрлĕ Хĕрес делегацин пуçлăхĕ туса Токио хулине Хĕрлĕ Хĕрес обществин пĕтĕм тĕнчери конференцине йачĕç. Токио хулине çитсен иккĕмĕш кунĕнчех Йапонин Хĕрлĕ Хĕрес çуртĕн коридорĕнче манпа Йапонин пĕр пысăк обществăлă дейателĕ тĕл пулчĕ. (Унăн йатне епĕ хупă ларура каласа паратăп). Вăл мана чей ĕçме чĕнчĕ. Епĕ унпа паллашрăм тата вăл ыйă сунса чĕннине хирĕç пыма пулнипе ответлерĕм. Калаçса ларнă чух çав асăннă çын çапла каларĕ: ССР Сойузĕнче епĕ тăракан политикăлă йухăмăн интересĕсем пĕр темĕнле правителствăн интересĕсемпе пачах килĕшÿлĕн пулса тăраççĕ, терĕ. Вăл çапла каларĕ: Совет Сойузĕн шалти политикăлă пурнăçĕ çинчен епĕ хакланине пĕлни пĕр темĕнле правителствăшăн та тата уншăн та питех те хаклă пулĕччĕ,—терĕ. Çав касхинех епĕ полпредпа Йуреневпа калаçрăм, вăл троцкист пулнине 1926 çултанпах пĕлнĕ. Епĕ ăна çав асăннă етемпе латсăр калаçнине каласа кăтартатăп. Йуреневă епĕ çапла каларăм: кунта сăмах мана пĕр темĕнле правителствăн шпионĕ, ăна пĕлтерсе тăраканĕ вырăнне туса хурасси çинчен пырать,—терĕм.

Çакăн хыççăн Йуренев кăсйерен çыру туртса кăларать те мана çапла калать: „Ĕçе тунă, пăркаланса хуçкаланма кирлĕ мар“. Вăл мана Пйатаков çырăвне кăтартрĕ, çыруне епĕ Мускавран хам илсе пытăм. Пйатаков ун патне çапла çырнă: „Çав темĕнле правителствă ку тĕлĕшпе (урăхла каласан, Раковскипе усă курас тĕлĕшпе) тен, хăйех утăмсем тума йышăнĕ“. Малашне Пйатаков Йуренев патне Богомолов пирки—Китайри полпред пирки çырнă. Ун пирки ăна çапла кăтартса çырнă: çав пĕр темĕнле правителствă унăн политикăлă линийĕпе килĕшмест, мĕншĕн тесен вăл çав правителствăна пулăшнинчен Великобританине ытларах пулăшса тăрать,—тенĕ. Йулашкинчен. Йуренев çырăва вуласа, çапла каларĕ: „Куна тума мана йăвăр пулать“,—терĕ. Унта, троцкиссене усă кÿмеле тăвас тесе, Китай-Хĕвелтухăç чукунçулне сутасси çинчен паллă пулса тăракан калаçусемпе усă курма кирлине кăтартса çырни пулнă. Йуренев троцкисла вăрттăнлăхпа Мускавра Пйатаковпа çыхăннă пулнă.

Йуреневпа калаçсан тепĕр икĕ кунран-и йе виççĕ кунран-и, пĕр чаплă апатлану хыççăн, пĕр темĕнле пысăк ĕçлĕ етем, çак апатланура ларакансем, манпа паллашрĕ.

Официаллă çын çапла пĕлтерчĕ: пирĕн интерессем çав пĕр темĕнле государствă интересĕсемпе килĕшÿлĕн пулса тăраççĕ, ССР Сойузĕнчи троцкиссемпе çав государствăн представителĕсем хушшинче килĕшÿ тунă,—терĕ. Çакăн хыççăн епĕ обществăлă дейателпе тата икĕ хутчен курса калаçрăм.

Мартăн 5-мĕшĕнчи ирхи лару

Айăпланакан Раковскине малала допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Раковский, есĕр хăвăр калассине каласа пĕтерме сăмах илеттĕр.

Раковский. Йапонири пысăк обществăлă организацине йертсе пыракан дейателпе иккĕмĕш тата виççĕмĕш хут курнăçнă чухне епĕр Йапонин Мускаври шпионне епĕ парса тăма пулнă сведенисем мĕнле характерпа пулмали çинчен тата парса тăрас техникă çинчен калаçса татăлтăмăр. Токиора чухне епĕ çак ĕçе Нойда доктора, Хĕрлĕ Хĕрес секретарне, йавăçтартăм, вăл контрреволюцилĕ терророрла организацинче тăнине епĕ пĕлнĕ ĕнтĕ. Манпа Йапони разведки хушшинчи çыхăну агенчĕ пулса ĕçлерĕ те ĕнтĕ вăл.

Токиора тата епĕ виççĕмĕш çынпа тĕл пултăм. Манпа вăл çак сăмахсемпе калаçу пуçарса йачĕ: „Есĕр господин Троцкин çывăх тусĕ пулнине тата унпа пĕршухăшлине епĕр пĕлетпĕр. Епĕ сиртен çакна ыйтма тивĕç: есĕр ун патне вăл Китай ыйтувĕ тăрăх çырнă статйасемпе, çавăн пекех тата Китайри троцкиссем хăйсене хăйсем тыткаланипе пĕр темле правителствă килĕшмест, тесе çырăрччĕ. Епĕр господин Троцкирен хăйне хăй тыткалас йенĕпе урăхла çулйĕр кĕтме тивĕçлĕ. Пĕр темле правителствăна мĕн кирлине господин Троцкин хăйĕнех ăнланмала. Тĕпĕ-йĕрĕпех калама кирлĕ мар, анчах та Китай ĕçĕсене хутшăнма сăлтав пултăр тесен, Китайра майлăрах инцидент пуçласа йама кирли паллах“. Çаксем çинчен пурин çинчен те—епĕ Токиора калаçусем иртерни çинчен, епĕ Йуреневпа калаçни çинчен, манăн тĕлпулусем çинчен, тата паллах, çак йулашки сĕнÿ çинчен епĕ Троцкине çырса пĕлтертĕм.

Вышинский. Есĕр хăвăр мĕнле разведкăсемпе çыхăннă?

Раковский. Англи тата Йапони разведкисемпе.

Вышинский. Крестинский? Айăпланакан Крестинский, есĕр мĕнле разведкăпа çыхăннă пулнă?

Крестинский. Нимĕç разведкипе.

Раковский. Токиоран епĕ кăсйене Йапони шпионĕн мандатне чиксе таврăн-

(Йулашки 2-мĕш страницăра).

Йулашки хыпарсем

Йапони влаçĕсен провокацилĕ махинацийĕсем

Йапони тинĕсĕнче пулнă вăйлă шторм 1937 çулхи нойабĕрĕн 22-мĕшĕнче Совет Сойузĕн пулă тытмали „Вымпел“ йатлă шхунине Йапонин Сахалин утравĕнчи çыранĕ çине кăларса пăрахнă. Шхунă çинчи командăра 4 çын тата 12 пассажир, вăл шутрах икĕ уйăхри ачалă пĕр хĕрарăм пулнă. Авари пулнипе инкек курнăскерсене пĕтĕм тĕнчери йĕркепе йăла тăрăх пулăшу парас вырăнне, Йапони влаçĕсем шхунăна тытса чарнă, командăна тата пассажирсене тĕрмене хупса хунă. Халь пĕлнĕ тăрăх, Кăнтăрти Сахалинра Йапони сучĕ шхунă капитанне пĕр çул хушши катăргăра ĕçлемеле тунă.

Совет правителстви хамăрăн нимĕншĕн те айăплă мар, аварирен инкек курнă çынсене ирĕке кăлармa ыйтнине хирĕç ответлесе, Йапони влаçĕсем вĕсене ССР Сойузĕнче арĕсленĕ Йапони шпионĕсемпе улăштарса пама сĕнеççĕ.

Совет правителстви вăл сĕнÿве йышăнассинчен татăклăнах пăрăннă.

Йапони влаçĕсем Совет Сойузĕн „Кузнецкстрой“ пароходне Хакодатере тытса чарнипе те çакăн пекех усă курма шутлаççĕ пулас, ССР Сойузĕнче арĕсленĕ шпионсемпе ытти преступниксене çав пароход командипе, пассажирĕсемпе улăштарса илме ĕмĕтленеççĕ пулас. Пуртĕ пĕлеççĕ, пароход çинче совет гражданĕсем пурĕ 72 çын.

Совет правителстви „Вымпел“ шхунин капитанне судпа айăпланине хирĕç, çавăн пекех тата „Вымпелпе“ „Кузнецкстройа“, вĕсен командисене, пассажирĕсене тытса чарнине хирĕç протест памашкăн ССР Сойузĕн Токиори полпредне хушнă.

Йапонин саккунсăр ĕçĕсене хирĕç ответлесе мерă йышăнас май, сакăр йапонеца Йапонине тухса кайма чарса лартнă. Вĕсене нумайăх пулмасть тĕрмене хупмала тунă, кайран, ăна улăштарса, Совет Сойузĕнчен кăларса йамала тунă пулнă.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Испанин оборонă министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 8-мĕшĕнче Испанири фронтсенче пысăк улшăнусемех пулман.

* * *

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх мартăн 8-мĕшĕнче касхине фашиссен самолйочĕсем Барçелонă тавринчи вырăнсем çине икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă.

(ТАСС).

Кăмрăк илме Таллина кайнă

„Йермак“ бортĕнчен çапла пĕлтереççĕ: Фински заливра пăрçĕмĕрен пĕр-пĕрин çине купаланса ларнă пысăк пăрсене тĕл пулчĕ.

Çакăн пирки, пăрсене çĕмĕрсех малала каймашкăн кăмрăк запасĕсем чылай кирлĕ, „Йермак“ Таллина (Естони) кайать.

Пăрçĕмĕрен Ленинграда мартăн 15-мĕшĕнчен кайа мар çитме шутлать.

„Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Айăпланакан Раковскине малала допрос туни

(МАЛАЛИ)

тăм. 1935 çулта тата 1936 çулăн малтанхи çурçулĕнче, урăхла каласан, Каменевпа Зиновьев процесĕ пуçланиччен, епĕ Найда урлă Йапони разведкине пилĕк пĕлтерӳ патăм. Епĕ картăчкă системине пăрахăçа кăларни ĕçукçи тăрăвĕнче мĕнле пулăрни çинчен, колхозсем çинчен, промфинплана тултарни çинчен сведенисем парса тăтăм. Вăл сведенисенче кăтартнă шухăшсемпе выводсене епĕ пĕлетăркачах йурийех пессимисăмла, хура краскăсемпе сăрласа кăтартрăм. Çакна епĕ агрессорсен аппетитне хавхалантарас тесе çавăн пек турăм.

1935 çул пуçламĕшĕнче епĕ Троцкинчен иккĕмĕш çыру илтĕм. Вăл малтанхи çырура кăтартнă темă патне çавăрăнса пынă, тата Сталина пĕччен тăратса хăварма, пĕтĕм тĕнчери хутшăнусенче Совет Сойузне пĕччен тăратса хăварма директивăсем панă.

Троцкин çак директивине пурнăçа кĕртме маншăн майлă вăхăт килсе тухрĕ. Ку вăл Франци премьерĕ Лаваљ килнĕ вăхăтра пулчĕ. Франципен Лаваљпе пĕрле килнĕ журналиссем хушшинче Емиљ Бӳре пулнă, вăл манăн епĕ Францире пурăннă чухнехи кивĕ çывăх тус, вăл сылтăм республиканцăсен лагерне куçнă та Францири пысăкран та пысăк тата чи авторитетлă „Ордр“ хаçат директорĕ пулса тăнă. Епĕ ун патне „Метрополь“ гостиницăна кайрăм, Францине Совет Сойузĕ çывхарнинчен хăрушлăх сиксе тухма пултарать, çавăн пек çывхарни вăл Германи йенчен çĕнĕ превентивлă вăрçă кăларса йама пултарать, тесе ăна ĕненерес задачă лартрăм хамăн умма. Епĕ ăна: ку вăл манăн шухăш çеç мар, тесе каларăм, епĕ вĕт, пĕтĕм оппозици шухăшне, вăл оппозици Совет Сойузне вăрçăра çĕнтерсе тăкас шухăшлă пулнине пĕлнĕ.

Вышинский. Мĕнле оппозици çинчен калаттăр-ха есĕр?

Раковский. Епĕ сылтăмрисем çинчен тата троцкиссем çинчен калатăп.

Вышинский. Ăçтан оппозици пултăр-ха вăл? Контрреволюционерсен бандитла ушкăнĕ вăл!

Раковский. Бӳре мана çапла ответлерĕ: Германире милитаризаци ӳсе пыни умĕнче Франци пĕччен йулма пултараймасть. Агрессор çине йăпăлантарса чăракан кĕпе тăхăнтартса йарас пулать, çак вăл вăрçа пуçарса лартмалли пĕртен пĕр май пулать,—терĕ. Çак ответ çинчен епĕ Троцкине çырса пĕлтертĕм.

Хаљ ĕнтĕ епĕ каллех хама ссылкăна йарачченхи тăван çĕршыва сутас тĕлĕшпе епĕ мĕн-мĕн туни çинчен каласа кăтартатăп, хам кăтартса парассине епĕ мĕнле майпа „Интеллидженс Сервис“ агенчĕ пулса тăнинчен пуçлатăп.

Ĕç 1924 çул вĕçĕнче Макдоналд правителстви арканса кайнă хыççăн пулса иртрĕ. Ман пата Лондонри полпредствăна икĕ англичанин—Армстронгпа Леккерт пычĕç, вĕсем манăн паллана çынсем. Леккертпа Армстронг Англири паллă шултра капиталисăн Ллойд Джордж кабинетĕнче ĕлĕк министр пулса ĕçленĕ Инверфорс лордăн çывăх çыннисем пулнă. Армстронг çапла каларĕ: „Епĕр сире хытă йуратапăр тата сире хăратакан хăрушлăх çинчен сире асăрхаттарас терĕмĕр“—терĕ. Вăл кăсйерен хут татки кăларса мана тыттарчĕ. Ку çыру пулнă, ăна машинкăпа пичетленĕ те ултавлă манăн хушаматна алă пуснă.

Вышинский. Çав çыру мĕн тума хатĕрленĕскер пулнă?

Раковский. Вăл çырува Германине çырнă, кама памалине кăтартман.

Вышинский. Германи разведки валљи?

Раковский. Пулма пултарать.

Вышинский. Вăл çырура мĕскер тенĕ?

Раковский. Вăл çырура тĕслĕхрен çапла каланă: Сирĕн пата Румынири суту-илӳ фирмисемпе хаçат редакцисен çакăнта кăтартнă спискине йарса паратăп, вăрçă вăхăтĕнче Румынине Германи йенне хутшăнтарас шутпа вăл фирмăсемпе хаçат редакцисене Германи йенне çавăрас пулать“.

Вышинский. Çырура çавăн пек çырни мĕне пĕлтерет?

Раковский. Çырура çавăн пек çырни вăл—манăн Германи разведкипе, Германи правителствипе, йе Германири темĕнле организаципе çыхăну пурри́не пĕлтерет.

Вышинский. Румыни территоринче Румыни граждăнĕсене Германине пулăшма йавăçтарас ĕçре есĕр Германине пулăшрăр-и?

Раковский. Тĕрĕс.

Вышинский. Румынире есĕр мĕн туса пурăннă? Сирĕн пурăнма мĕнле средствăсем пулнă?

Раковский. Епĕ пурлăхлă çынăн ывăлĕ пулнă. Манăн атте помещик пулнă.

Вышинский. Епĕ ыйтрăм—сирĕн пурăнма мĕнле средствăсем пулнă?

Раковский. Манăн пурăнмали средствăсем—атте пурлăхĕн дохочĕсем пулнă.

Вышинский. Апла пулсан есĕр фантйе дохочĕсемпе пурăннă?

Раковский. Йал хуçи пулса пурăннă.

Вышинский. Урăхла каласан, помещик?

Раковский. Çапла.

Вышинский. Епĕ ыйтува тӳрех лартасшăн: епĕ çакна шанмастăп—Армстронг сире панă çыру çине, Германи разведки патне адресленĕ çыру çине сирĕн ултавлă суйа йатпа мар алă пуснă, чăн-чăнах есĕр алă пуснă, мĕншĕн тесен есĕр унчухнех Германи разведкинче тăнă.

Есĕр малашне Англи разведкипе пĕрлешсе пурăнни çине куçăпăр. Малала ка-

Раковский. Армстронгпа Леккерт çав документа мана парсан, епĕ: „Ку вăл пысăкран та пысăк ултав“ тесе каларăм. Документа Берңра октабĕрĕн 15-мĕшĕнче паллă тунă, епĕ унчухне Берңра мар, Румынире пулнă. Вара вĕсем мана çапла асăрхаттарчĕç: „Есĕр Зиновьев çырунe те ултав тесе çирĕплететĕр, акă результат: Макдоналд правителстви арканса кайни тата есĕр Англи правителствипе алă пусса çирĕплетнĕ договора çитес вăхăтра пĕтĕрсе хурасси. Сирĕн çинчен тата есĕр мистер Троцкин йухăмĕнче тăни çинчен, есĕр унпа çывăх пурăнни çинчен епĕр Истмен господинран пĕлтĕмĕр (Истмен — Америкăри троцкист). Çак обстойателствăна пула çеç сире çак çĕршыва полпред туса йарасси çинчен пирĕн правителствă агреман*) парасси пирки „Интеллидженс Сервис“ хирĕçлемерĕ“. Çак заявлени пĕтĕм лару-тăрува улăштарса йачĕ.

Епĕ Мускава килтĕм те Троцкине пĕлтертĕм. Ултавлă çыру—каласусем пуçармалăк сăлтав пулнă, тесе каларĕ вăл.

Англи разведкипе çыхăнасси çинчен Троцкий килĕшрĕ, мана çак ĕçе тума пиллерĕ тес пулать, асăрхасарах пурăнас пулать, вĕсем троцкисăм валљи мĕн парма пултарнине палăртас пулать, терĕ. Лондона таврăнсан, кĕçех мана пĕр официаллă çын патне чĕнчĕç, вăл çын мана— „Интеллидженс Сервис“ панă сĕнӳве чăнчăнах хушнă тăрăх тунă, тесе çирĕплетрĕ. Хăйсен черечĕпе Армстронгпа Леккерт —манпа вĕсем хушшинчи çыхăну агенчĕ Фарбман журналист пулать, тесе каларĕç. Çак ĕç çумне çыхăну агенчĕсем пулса ĕçлеме епĕ полпредствăри татах икĕ сотрудникe йавăçтартăм. Ку ĕнтĕ 1925 çул пуçламĕшĕнче пулса иртрĕ. Лондонран тухса кайас умĕн епĕ документ парса хăварма ĕлкĕртĕм—вăл документра епĕ Вăтам Азири нацилĕ республикăсенчи совет политикине хак патăм, вăл хака епĕ ССР Сойузĕне тăшманла çыхăнса тăрасшăн тăрăшакан çын пек патăм. Çав 1925 çултах октабĕрте мана полпред туса Париже йачĕç. Çак вăхăтра „Интеллидженс Сервиспа“ тӳррĕнех çыхăну тытма маншăн йавăр пулнă. Вара ман патăма каллех Фарбман пычĕ, унпа калаçнă хыççăн „Интеллидженс Сервиса“ тӳрех пулăшса тăрас ĕçе Мдиванине йавăçтарма йышăнтăмăр. Унтан епĕ „Интеллидженс Сервиспа“ çыхăну тытма парахрăм. 1934 çулта, çулла епĕ ссылкăран таврăнсан, манăн çыхăнусем çĕнĕрен пуçланчĕç.

Вышинский. Каласа парăр-ха, Троцкий „Интеллидженс Сервиспа“ çыхăнса тăни çинчен мĕн пĕлеттĕр есĕр?

Раковский. Вăл Троцкине Алма-Атана ссылка йарас умĕн пулнă. Малтан ăна Астрахане йамала пулнă, анчах вăл унта йарассине улăштарттарма тăрăшрĕ, вара ăна Алма-Атана йамала турĕç. Епĕ унăн хватерĕнче, Грановский урамĕнче, пултăм. Унчухне вăл хăйне Астрахане йарас вырăнне Алма-Атана йамала тунăшăн пит савăнчĕ. Епĕ тĕлĕнтĕм. Вĕт, Алма-Атана çитмешкĕн Фрунзерен темиçе кун хушши кайас пулать (унчухне унта чукунçул çукчĕ). Вăл: „Ун вырăнне Китай чикки патне çывăхрах“, терĕ, унтан вăл мана карттăсен тĕрки çине тĕллесе кăтартрĕ. Вăл мана хăй тарма шутлани çинчен ăнланса илме пачĕ. Епĕ унтан: Хĕвеланăç Китай урлă, хăйарлă пушхирсем урлă, сăрт-тусем урлă, средствăсăр-мĕнсĕр тарассине мĕнле майпа организацилĕн-ха, тесе ыйтрăм. „Мана „Интеллидженс Сервис“ пулăшать“,—терĕ Троцкий. Вара вăл мана çирĕп пытарса усрама хушса, хăй 1926 çултанпа „Интеллидженс Сервиспа“ перступленилe çыхăну пуçласа йани çинчен пĕлтерчĕ.

Вышинский. Кам урлă?

Раковский. „Лена Голдфилдс“ концессин пĕр представителĕ урлă.

Вышинский. Апла пулсан хăй Главконцесском председателĕ пулнă вăхăтра вăл „Лена Голдфилдс“ фирми урлă „Интеллидженс Сервиспа“ çыхăну пуçласа йанă?

Раковский. Йăлтах тĕрĕс. Вăл мана тата тепĕр факт пĕлтерчĕ: вăл Англин „Интеллидженс Сервисне“ хăшпĕр ĕçсем туса пама та ĕлкĕрнĕ пулнă. Ку 1927 çул пуçламĕшĕнче пулнă. Унăн сăмахĕ тăрăх, çав организаци ăна хăшпĕр пулăшу панă, çавăншăн вара вăл консерваторсене Англипе ССРС хушшинче ĕçлĕ çыхăнусене татассине пурнăçа кĕртме пулăшнă вăл „Интеллидженс Сервиса“, Аркос çине тапăнас ĕçе организацилеме май пурри вырăнлă та лайăх хирĕçӳ тума пулăшать, тесе кăтартса панă. Унтан вăл Лондонра ĕçлекен хăшпĕр троцкиссен йачĕсене, çав шутра Мӳллер йе Миллер йатне, каларĕ. Çав троцкиссем урлă вара йатарласах хатĕрленĕ суйа документсене Аркос çуртĕнче тупăнмала тунă; çапла вара вăл Джойнсон (унчухнехи шалти ĕçсен министрĕ) аллине кирлĕ сăлтав тупса панă, çав сăлтавпа Джойнсон хăйĕн тусĕсене, ССР Сойузĕпе Англи хушшинчи дипломатилĕ çыхăнусене татма кирлĕ, тесе ĕненерме пултарнă.

Епĕ тата мана Троцкий 1927 çулта çулла Францире туса ирттерме хушнă каласусем пирки каласшăн. Епĕ Ройара Николь депутатпа курнăçрăм. Николь—çурçĕрте йĕтĕнрен таварсем, тĕртсе тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен пит пысăк фабрикант, вăл сылтăмри республиканецсен шутне кĕрет. Ун чух епĕ унтан оппозици валљи кирлĕ майсем, малашнехи шанчăкĕсем çинчен ыйтрăм. ССР Сойузне хирĕç Францири агрессивлă шухăш-кăмăл тытса тăракан капиталисăмлă ушкăнĕсем хушшинче хамăршăн пулăшу, тĕрек шырама пулать-и, тесе ыйтрăм. Вăл мана: „Паллах пулать, есĕр хăвăр кĕтниччен те ытларах пулма пултарать“,—тесе ответ пачĕ. Анчах, ку йапала пуринчен ытла икĕ обстойателствăран килет, терĕ. Пĕррешĕш обстойателствă—оппозици чăнчăн вăй, ĕç тума пултаракан вăй пулмала, иккĕмĕш обстойателствă—вăл оппозици Франци капиталне концессисем парасса мĕн таран тума пултарасси пулать.

Хаљ ĕнтĕ манăн контрреволюцилĕ çыхăнусем çинчен. 1934 çулта ссылкăран таврăнсан епĕ, Сосновскипе курнăçрăм, унпа çыхăну тытса тăтăм. 1935 çулхи март уйăхĕнче Сосновский мана çапла пĕлтерчĕ: сылтăмрисемпе троцкиссем пĕрпĕрин хушшинче тахçанах блок тунă, тĕллевсемпе методсем йăлтах пĕр пек, килĕшӳлĕ, вĕсем—шпионаж, диверси, сăтăрлă ĕç тăвасси, терĕ.

Епĕ 1934 çулта тĕлпулнă вăрттăн ĕçлекен тепĕр çын—Крестинский пулнă. Хам Токиона кайнă май епĕ ун патĕнче, Халăх Комиссариатĕнче икĕ хут пултăм. Епĕ унпа иккĕмĕш хут тĕлпулнă чух вăл мана хăй вăрттăн ĕçлени çинчен пĕлтерчĕ.

Вышинский. Троцкис пек вăрттăн ĕçлени çинчен-и?

Раковский. Троцкис пек.

Вышинский. Калăр-ха, хăвăрăн Совет Сойузĕ умĕнчи айăпăра йышăннине кĕскен сăмахпа мĕнле каласа пама пултарнă пулаттăр есĕр?

Раковский. Епĕ йышăнатăп: 1924 çултан пуçласа епĕ советлă социалисăмлă тăван çĕршывăн изменникĕ пулса тăнă.

Вышинский. Есĕр, троцкиссем, совет государствине хирĕç çав кĕрешӳве мĕншĕн туса пынă-ха?

Раковский. Влаçа туртса илессишĕн.

Вышинский. Есĕр влаçа фашиссем пулăшнипе туртса илесшĕн пулнă?

Раковский. Фашиссем пулăшнипе. Йулашкинчен влаç фашисла агрессорсен аллине кĕрсе ӳкнĕ пулĕччĕ.

Вышинский. Есĕр хăвăр çав фашисăм тĕллевĕсемпе интересĕсемшĕн ĕçленĕ ĕнтĕ?

Раковский. Çапла, йышăнатăп.

Вышинский. Шпионаж меточĕсемпе ĕçленĕ?

Раковский. Йышăнатăп.

Вышинский. ССРС çине тапăнас-мĕн пулсан çав пулас вăрçăра ССР Сойузне çĕмĕрсе тăкмала тăвас майпа ĕçленĕ-и?

Раковский. Çапла, йышăнатăп.

Вышинский. Сăтăрлă ĕç, диверси, террор меточĕсемпе усă курса ССР Сойузĕн хăвачĕпе оборонă тĕрекне вăйсăрлатма хатĕрленес май ĕçлесе пынă-и?

Раковский. Йышăнатăп.

Вышинский. Ку ĕнтĕ совет государстви умĕнче изменă туни кăна мар, тата пĕтĕм тĕнчери рабочи йухăмĕ умĕнче те изменă туни пулать. Есĕр хăвăр çакнашкал айăплă тесе йышăнаттăр-и?

Раковский. Йышăнатăп.

Вышинский. Ыйтусем тек çук.

Айăпланакан Зеленскине допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Зеленский, есĕр малтанхи следствире хăвăр кăтартса панисене çирĕплететтĕр-и?

Зеленский. Çапла, епĕ çирĕплететĕп. Епĕ чи малтанах маншăн чи йавăр преступлени пулса тăракан хамăн патша охранкинчи ĕçсем пирки каласшăн. Епĕ Самарти охранкăн агентĕнчĕ 1911 çултан пуçласа 1913 çула çитиччен тăтăм.

1911 çулта çулла ман патра ухтару турĕç. Ман патра епĕ социал-демократла организацинче тăнине палăртакан хăшпĕр документсем тупрĕç. Мана жандарм управленине илсе карĕç, унта Бетипаж полковник допрос турĕ, вăл мана çапла каларĕ: йе вĕсем ман валли каторгă тупса параççĕ, йе манăн охранкă пайĕн информаторĕ пулмала. Епĕ хăраса ӳкрĕм те вĕсен информаторĕ пулма килĕшӳ патăм.

Охранкăна йавăçтарнă чухне мана „Очкастый“ тесе йат пачĕç. Мана вырăнти социал-демократла большевикла ушкăн ĕçĕсем çинчен, вĕсем ликвидаторсемпе мĕнле кĕрешни çинчен пĕлтерсе тăма хушрĕç. Малала вара епĕ çак сутăнчăклă ĕçшĕн йăланах 25, 40, 50, тата 100 тенкĕ илсе тăтăм. 1912 çулхи февраль уйăхĕччenех çавăн пек пулса пычĕ.

Епĕ большевиксен пĕр-пĕрне пулăшакан обществăри тата печатниксен клубĕнчи ĕçĕсем çинчен, большевиксен потребител обществинчи ĕçĕсем çинчен сведенисем парса тăтăм. Епĕ чылай çынсене арĕслеттертĕм. Пелтерсе тăрас ĕçсене тунисĕр пуçне мана жандармсем провокаци ĕçне те тума хушрĕç. Мана типографи организацилеме хушрĕç. Мана квитанци кĕнекисем çине пичетсем пуссах член укçисем пухассине организацилеме хушрĕç, урăхла каласан, организацине арĕсленĕ чухне 102 статйа тăрăх суд процесĕ тума тата çынсене каторгăна йама материал тума хушрĕç.

1912 çулта мана хам тыттарса йанă çынсемпе пĕрле: Буйанов Благодатов, Левин, Вульфсон тата Куменкопа пĕрлех арĕслерĕç. Самарти тĕрмере ларнă чухне епĕ Бетипаж патне хама допроса чĕнме ыйтса зайавлени патăм, мĕншĕн тесен манăн хамă мĕнле сăлтавсемпе арĕсленине пĕлес килеччĕ. Бетипаж мана допроса чĕнчĕ те, арĕслессине мана сыхлассишĕн тунă, терĕ. „Епĕр сире арĕслени сирĕншĕнех лайăх“ тесе каларĕ. Тĕрмере епĕ 6 уйăх лартăм, ун хыççăн Нарым крайне йарас умĕн ман пата вăрттăн хватерте манпа калаçнă çав жандарм офицерĕ пычĕ те, ссылкăран ссылкăри çынсен шухăшĕсем çинчен пĕлтерсе тăма ыйтрĕ.

Çапла вара епĕ Нарымри ссылкăнах рабочисен йухăмĕн предателĕ пулса пытăм.

Хамăн преступленисене парти организацийĕ, парти çыннисем умĕнче пытарнине пула епĕ парти членĕ пек вĕсен шанчăкĕпе усă курса пурăнтăм.

Вышинский. Ссылкăран Авербух йачĕпе çырусем йанă. Кам пулнă вăл Авербух?

Зеленский. Типографи хуçи.

Вышинский. Тата çав вăхăтрах охранкă агенчĕ те?

Зеленский. Çапла пулас.

Вышинский. Судран, çав 51-мĕш томрах, 24-мĕш лист çинче 1937 çулхи декабĕр уйăхĕнче арĕсленĕ Лейб Моисейевич Авербуха допрос тунă протокола пăхса, чăннине пĕлме ыйтатăп. Çавă-и вăл?

Зеленский. Вăл çавах пулĕ, тесе шутлатăп.

Вышинский. Авербух акă çапла кăтартса парать: „Унсăр пуçне ман адреспе Самарти жандарм управлени, жандарм пайĕн ссылкăра пулнă агентчĕ те усă кураччĕç. Астăватăп, ман урлă ссылкăра пурăнакан Исаак Абрамовичăн пĕлтерӳвĕсем те пыраччĕç“. Есĕр-и ку?

Зеленский. Çапла пулĕ, тесе шутлатăп.

Вышинский. Калăр-ха, айăпланакан Йагода 1924 çулта сирĕн патра пулса сире жандарм управленинчен çакнашкал фотографи тата тактилископи ӳкерчĕкĕсене пани пулнă-и?

Зеленский. Пулнă.

Вышинский. Айăпланакан Йагода, есĕр çак факта çирĕплеттĕр-и?

Йагода. Çапла. Вăл унăн пиччĕшĕн ĕçĕ пулнă. Унăн пиччĕшне арĕслерĕç. Зеленский питĕ хуйхăрачче. Унăн пиччĕшĕ провокатор пулнă, ăна 1924 çулта персе пăрахнă.

Вышинский. Есĕр çак материала Зелескине патăр-и? Мĕншĕн?

Йагода. Вăл унчухне партин Мускав комитечĕн çекретарĕ пулнă. Вăл килмерĕ, анчах телефонпа чĕнсе мана пыма ыйтрĕ.

Зеленский. Вăл ман пата хамăн пиччен хучĕсене тата манăн Самарти ĕç хучĕсене илсе пычĕ.

Вышинский. Акă çак ĕç хучĕсене-и?

Зеленский. Çавсене. Малала хамăн сăтăрла ĕçсем пирки. Епĕ сылтăммисен организацине 1928 çул вĕçĕнче йе 1929 çул пуçламĕшĕнче кĕтĕм. Вăл организацине епĕ хамăн айăплă ĕçсене усса палăртассинчен хăраса кĕтĕм, кун çинчен айăпласа çырнинче кăтартнă.

Вышинский. Мĕнле айăплă ĕçсем?

Зеленский. Провокацилĕ. Мана А. П. Смирнов йавăçтарчĕ. Ташкентран килнĕ хыççăн епĕ сылтăммисен 1929—1930 çулсенче Смирнов патĕнче пулнă пухусенче чылай пултăм. Пухусенче парти çулйĕрне çивĕччĕн критиклени тата Тĕпкома хирĕç кĕрешмели çулйĕре палăртнă.

1929—1930 çулта Смирнов мана Вăтам Азире коллективизаци ĕçне пăсас тĕлĕшпе чылай кăтартусем пачĕ.

Вăл кăтартусем çапла пулнă: Смирнов калашле, кулак хуçалăхĕсене кирек мĕнле пулин те, сыхласа хăвармала; коллективлă йухăм вăйланассине пур майсемпе те чăрмантармала; колхоз строителствине чăрмантармала тата аркатмала. Смирнов националиссен сылтăмла организацине партине хирĕç кĕрешме пулăшма кирли çинчен те кăтартса пачĕ. Ташкентра епĕ „коллективизаци тĕлĕшпе Совет Сойузĕнче малта пыракан районсене хăваласа çитсе иртсе каймала“ текен лозунг кăларса тăратрăм. Çак кăтарту тăрăх вырăнти организацисем коллективизацине хăвăрт утăмсемпе илсе пыма план туса, администрацилĕ меслетсемпе колхозсем тума тытăнчĕç. Колхоз строителствине çапла майпа салатассине национал-шовинисла елементсем те йарса илчĕç, вĕсем чылай перегибсем турĕç. Халăха тарăхтарасси чылай сарăлнă хыççăн Тĕпком умĕнче коллективизаци чухне тунă çав пысăк йăнăшсене пытарса тăма май пулмарĕ, епĕ вара йăнăшсене тӳрлетес вырăнне, ĕçе çынсем колхозсенчен тухмала—çавна чармала мар тума кăтарту патăм. Çак, çиелтен пăхсан усă пек туйăнакан формулă кулаксем валли агитаци тума тата кулаксен активлăхне колхозсене салатнă çĕре йама çул уçрĕ.

Хама Вăтам Азирен Мускава куçарсан та епĕ сылтăммисен центрĕн представителĕпе Смирновпа çыхăну тытса пытăм. Смирнова сылтăмми тесе тăрă шыв çине кăларнă хыççăн епĕ Антиповпа çыхăну тытма пуçларăм. Антиповран епĕ кооперации тата Центросойуз ĕçĕнче сăтăрла ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе кăтарту илтĕм. Сылтăммисен организацийĕн суту-илӳре сăтăрлас ĕçсен тĕллевĕ çакăнта пулнă: Антипов тата сылтăммисем пурте снабжени ĕçне начар организациленипе халăх хушшинче килĕшменлĕхе, çавăнпа вара, правителствăпа килĕшменлĕхе вăйлатма кирлине, халăхăн пурнăçĕпе çывăхрах çыхăнакан хуçалăхсенче: çурт-йĕр ĕçĕнче, кооперации тата суту-илӳре сăтăрлассине пысăк вырăна хураччĕç, урăхла каласан, сăтăрла ĕç пачах провокаторла пулса пынă. Сылтăммисем куллен кирлĕ таварсемпе суту-илӳ тăвассине вăхăтран вăхăта чарса лартаччĕç. Çапла, тĕслĕхрен, суту-илӳ ĕçне вăхăтран вăхăта çавнашкал чарса лартасси 1936 çулхи пĕрремĕш кварталăра Курск облаçĕнче сахăр сутас йенĕпе пулнă, нумайĕш лавкасенче пĕр-икĕ ерне хушши сахăр пулман. Çавнашкал суту-илӳ ĕçне вăхăтран вăхăта сăтăрла чарса лартассине Ленинград облаçĕнче махоркă сутас йенĕпе тунă. Çавнашкал суту-илӳ ĕçне вăхăтран вăхăта чарса лартасси 1936 çулта çулла Белоруççинче чылай вырăнсенче, чикĕ хĕренчи районсенче пулнă.

Суту-илӳ ĕçне вăхăтран вăхăта чарса лартасси мĕнле пулнине ăнланса илме епĕ çаксем çине кăтартса паратăп: Советсен суту-илӳпе кооперации секцийĕсем, суту-илӳ инспекцийĕсем тĕрĕсленĕ 30 пин лавкаран 1936 çулти пĕрремĕш кварталта 3700 лавкара тăвар пулман, 42 пин лавкаран 2 пин лавкара сахăр пулман. 1936 çулхи 3-мĕш кварталра 36 пин лавкаран 1600 лавкара махоркă сутни пулман. Кун пек пулни уйрăм вырăнсенче çеç мар, чылай сарăлнă.

Вышинский. Сирĕн айăплă ĕçсене пула çу тĕлĕшпе ĕç мĕнле тăнă?

Зеленский. Епĕр йалта çупа суту-илӳ тумастпăр.

Вышинский. Епĕ есĕр мĕнпе суту-илӳ туни çинчен ыйтмастăп. Есĕр пуринчен малтан Тăван çĕршывпа суту-илӳ тунă. Епĕ ыйтатăп, сирĕн организаци таварçаврăнăшне аркатса ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем парассине пĕтерес йенĕпе мĕнле мерăсем йышăннă? Сахăр тата таварсăр пуçне çу йенĕпе мĕн те пулин пулни паллă-и сире?

Есĕр малтанхи следствире ишĕлтерӳлĕ ĕç çакăнта та пулнă тесе кăтартса патăр: пысăк пахалăхлă çусем çеç каларасси патне илсе пынă, пасарсене йӳнĕ тăракан çу памасчĕ, терĕр. Факт-и ку йе факт мар-и?

Зеленский. Факт.

Вышинский. Малала, çавăн пек пулни потребител бюджетĕнче палăрнă-и? Вăл, халăха савăнтарни йе кӳрентерни пулать-и?

Зеленский. Кӳрентерни.

Вышинский. Есĕр çавăн патне туртăннă?

Зеленский. Туртăннă.

Вышинский. Çу ĕçĕпе çыхăннă сирĕн организаци членĕсем çу ăшне кантăк катăкĕсем пăрахни пулнă-и?

Зеленский. Çу ăшне кантăк катăкĕсем пăрахни пулнă.

Вышинский Совет влаçне, совет халăхне хирĕç айăплă, заговорлă ĕçсем тăвакансем сирĕнпе пĕрле пулнă, есĕр хушнине пурнăçлакансем çу çине пăтасем пăрахни пулнă-и?

Зеленский. Пулнă.

Вышинский. Çакă пулать те ĕнтĕ сăтăрла тата диверсилĕ ĕç организацилени. Çавăншăн есĕр хăвăра айăпла тесе йышăнаттăр и?

Зеленский. Йышăнатăп.

Вышинский. Есĕр блокăн ĕçĕсемшĕн ответ тытаттăр-и?

Зеленский. Ответ тытатăп.

Вышинский. Çу çинче пулнă, пирĕн халăхăн пырĕсене, хырăмĕсене касна кантăксемпе пăтасемшĕн?

Зеленский. Ответ тытатăп.

Вышинский. Халь тата çăмартасем пирки. Ку ыйту та халăха интереслентерет. Мускава хутран-ситрен çăмартасемсĕр хăварма пикенесси пулнă-и? Çавăн пек тунисем пулнă-и?

Зеленский. Çапла, пулнă.

Вышинский. 1936 çулта сирĕн айăпупа, тӳррĕн сирĕн айăпупа мар, çав заговорла блока активлăн хутшăнса ĕçленĕ çын айăпĕпе Мускав çăмартасемсĕр ларни пулнă-и?

Зеленский. Пулнă Епĕ халь хăш уйăхра пулнине калаймастăп, анчах çакăн пек факт çинчен калама пултаратăп. 1936 çулта 50 вагон çăмартана сăтăрла пăсни пулнă.

Вышинский. 50 вагон çăмарта! Вăл ăçта, Мускавра-и?

Зеленский. Çапла.

Вышинский. Вăл есĕр хушнипе пулнă-и?

Зеленский. Çапла, вăл епĕ хушнипе пулнă.

Вышинский. Член...

Зеленский. Контрреволюцилĕ организацин членĕ хушнипе.

Вышинский. Есĕр вăл вăхăтра кам пулнă?

Зеленский. Центросойуз председателĕ.

Вышинский. Халь малала калама пултараттăр.

Зеленский. Епĕ потребителсене укçа тавăрса панă чух улталани, тавар виççе, турттарса панă чух улталани сăтăрлас ĕçсенчен кайра тăмасть, тесе шутлатăп.

Вышинский. Мĕн тума ун пек тунă?

Зеленский. Халăха тарăхтарма.

Вышинский. Урăхла каласан, провокацилĕ тĕллевсемпе?

Зеленский. Ăнланмала. Çав ĕç механики оптовой организацисенче таварсен хакĕсен прейскуранчĕ çуккинче пулнă. Çавна пула ревизи тăвакан тата потребителсем те час-часах таварсен палăртнă хакĕсене тĕрĕслеме пултарайман. Хаксене суту-илӳ организацисем йе сутă тăвакансем хăйсем тĕллĕн, урăхла каласан, ним контрольсĕр хунă. Çапла тунипе потребителе улталакана тытма йавăр пулнă. Кунашкал пуласси хытă сарăлнăччĕ. Ку йенпе пулнă сăтăрлă ĕççене хаклама епĕ суту-илӳпе кооперации секцисем тĕрĕсленĕ 135000 лавкара потребителсене улталасси 13000 лавкара пулнине палăртни çине кăтартса паратăп. Тĕрĕссипе вĕсен хисепĕ тата пысăкрах.

Сăтăрлас ĕçре пысăккăн сарăлнă йапала вăл,—ăна та халăха тарăхтарас тĕллевпе тунă,—таварçаврăнăшне шăнтса лартни пулать, ăна таварсене тĕрĕс мар йе вăхăтра мар йарса панипе туса пынă. Çапла, сăмахран, çакăн пек ĕçсем те пулнă: çуллахи таварсене хĕлле йарса панă, хĕллехи таварсем лавкасене çулла пынă.

Вышинский. Урăхла каласан, потребителе çулла çăматăсем сĕннĕ, хĕлле—тапăчкăсем?

Зеленский Çапла.

Епĕ тата таварсем кӳрсе пырасси тата вĕсене тытса усрас ĕçсенчи сăтăрлă меслет çине кăтартса парасшăн. 1936 çулхи 4-мĕш кварталра патшалăха тырă сутакансем валли таварсем уйăрнăччĕ. Таварсене тырă илекен мĕн пур районсене те йанă. Тутар республикинче, Башкиринче тата ытти районсенче тырă сутăн илесси начар пыни палăрчĕ. Тырă сутăн илмелли фонда памалли таварсене 4—6 уйăх хушши çавăнта тытса усранă. Кайран тырă сутăн илесси иртсен çеç вĕсене сутас ыйтăва лартнă. Халăх лавкасенче тавар пуррине курнă, анчах илме пултарайман, ку вара, хăй черечĕпе, халăха хытă тарăхтарнă.

Манăн тата тепĕр пысăк ыйтупа каламала, вăл—растратăпа пурлăха салатма пулăшни çинчен. Епĕ учот ĕçне туса пыма сăтăрла инструкци тума хушрăм. Ку йенĕпе сăтăрла ĕç епĕ суту-илӳ тунине группăсем тăрăх, группăсен системи тăрăх туса пыма хушнинче, кунашкал туни контроль ĕçне хавшатрĕ. Унсăр пуçне епĕ бухгалтери отчотне пысăккăн чакартăм тата чылай пысăк оперативлă отчота çаплипех хăвартăм, ку вăл отчот тăратмалли çынсен шутне илессине сӳрĕклетрĕ. Епĕ йурийех йалти потребител обществисен ревизи комиççисен ĕçне чăрмав кӳртсе пытăм. Ревизи комиççисем ĕçлемесĕр, обчăлăх контрольне организацилемесĕр растратăсене тата пурлăха салатнине хирĕç кĕрешме май çук. Епĕ вăл ĕççене организацилес йенĕпе йурийех мерăсем йышăнмасăр тăтăм. Манăн калас пулать, епĕр пайшчиксене шута илессине, пай капиталне учота илессине çĕмĕрес тĕлĕшпе те мерăсем йышăнтăмăр.

Епĕ тата та тепĕр ыйту çинчен каласшăн. Манăн задани пулнă, тата çав аппарата йут, тăшманла, совета хирĕçле, повстанчествăлă елементсене ытларах вырнаçтарма тĕллев пулнă. Центросойуз аппаратĕнче тăшманла елементсем нумай пулни çакăнтан та лайăх курăнать: Центросойуз аппаратĕнче епĕ ĕçленĕ чухне ĕçлекенсенчен 15 процентчĕ ĕлĕкхи меньшевиксем, есерсем, анархиссем, троцкиссем т. ыт. пулнă. Хăшпĕр облаçсенче сăмахран, Краснойарск крайĕнче, Иркутскра, Хĕвеланăç Çурçĕрте йут, урăх партисенчен тухнисем Колчак офицерĕсем т. ыт. тата та ытларах пулнă.

Председател Ульрих. Есĕр чикĕлешйен çе хăвăрăн совета хирĕçле çыхăнусем çинчен ним те каламарăр.

Зеленский. Епĕ Центросойузăн йутçĕршыв бюровĕпе кооперации мĕнле туни çинчен, вăл Совет правителстви çине мĕнле пăхни çинчен тĕрĕс мар информаци парса тăрас ĕçре усă курнă

Председател Ульрих. Есĕр кăтартса панисенче çакăн пек çырни пур

(Малали 3-мĕш страницăра).

*) Агреман—посола йышăнма пулса панă килĕшӳ.

*) Кĕскетнĕ стенограмми.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Айăпланакан Зеленскине допрос туни

(Малалли)

„Çав руководителсемпе Совет влаçне хирĕç восстани пулас пулсан пулăшу илесси пирки калаçса таталмала“ Çакна есĕр çирĕплететтĕр и йе çук?

Зеленский. Çирĕплететĕп.

Председател Ульрих. Мĕнле майпа усă курма хăтланна-ха есĕр?

Зеленский. Пĕр Александер текенскерпе курса калаçна чухне.

Председател Ульрих. Кам вăл Александер?

Зеленский. Англири рабочисен партти составне кĕрекен кооперации партин ликĕ. Вăл Килсен епĕ: Совет çĕршывĕнче влаçа сылтăммисем пулсан Англири кооператорсем мĕнле пăхĕç, сылтăммисене пулăшу пама пултарĕç-ши,— тесе ыйту лартрăм.

Председател Ульрих. Александер пулăшу пама пулчĕ-и йе ответлеме тытăнса тăчĕ?

Зеленский. Александер çав правителствăна сылтăммисем килнине саламлатăп терĕ. Пулăшу парасси çинчен калас пулсан, вара вăл çапла каларĕ: ембарго вăхăтĕнче Совет правителствине пана çавăн пек кивçенсемпе çавăн пек пулăшусене Англи кооператорсем кирек хăш вăхăтра та пама пулса гарантилеме пултарасçĕ,—терĕ.

Мартăн 5-мĕшĕнчи каçхи лару

Айăпланакан Икрамова допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Икрамов, малтанхи следствире кăтартса панисене есĕр çирĕплететтĕр-и?

Икрамов. Пĕтĕмпех çирĕплететĕп.

Председател Ульрих. Хăвăрăн совета хирĕçле ĕç çинчен кĕскен каласа парăр.

Икрамов. Совета хирĕçле ĕçсен çулĕ çине епĕ 1928 çулта тăтăм. Чăнах та, епĕ 1918 çултах çамрăксен националисла организацине кĕнĕ. 1919 çулхи апрел йе май уйăхĕччен епĕ çав организацинче члента тăтăм. Троцкисла оппозицине епĕ 1923 çулта хутшăнтăм.

1928 çулта епĕ, тĕрĕссипе каласан, контрреволюцилĕ националисла организацине йертсе пыракансенчен пĕри пулнă, тĕпрен илсен, вăл национал-фашисла организаци пулнă. Вăл организацин йачĕ „Милли Истиклял“, тепĕр майла каласан, „нациле никама пăхăнманлăх“ тенине пĕлтерет. Çак йат хăй çинчен хăйех каласа парать. Епĕр буржуалă никама пăхăнманлăхшăн кĕрешрĕмĕр. Унчухне епĕр нимĕнле конкретла ĕçсене те тума тытăнма пултарайман, мĕншĕн тесен вăйсене пухмала пулнă, кадрсене хатĕрлемеле пулнă; çак тĕллевпе епĕр аслă шкулсене, вĕренсе тухсан пирĕн шанчăклă кадрсем пулса тăракан, урăхла каласан, пурнăç тĕлĕшĕнчен совет влаçне йут пулса тăракан çамрăксем суйласа илтĕмĕр епĕр.

Çав етемсене хатĕрлесе, епĕр вĕсем урлă советпа партти аппаратне туртса илессине шаннă тата кирлĕ вăхăтра çак вăйсемпе контрреволюцилĕ переворот туса хурассине шаннă.

1930 çулта çав организацинчи çамрăксен ушканĕ Абид Саидова вĕлерсен 7—8 çынлă ушкăна арĕсленĕ пулнă. Çакăн хыççăн епĕ: ĕç арканчĕ, ытти тăрса йулнă çынсене сыхласа усрас пулать,—тесе шутларăм.

Вĕсем айăплă пулман тесе ахаль çеç каласан,—кулăшла пулнă пулĕччĕ. Çавăнпа та епĕр икĕпитленсе ĕçлеме пуçларăмăр, урăхла каласан, епĕ, Каримов, Рахими, партти организацинче çав етемсене тăрă шыв çине кăлармала туха-туха калаçрăмăр. Çапла вара пире ытти кадрсене упраса хăварма май пулчĕ.

Епĕ организаци саланса кайнине курсан, епĕ хам пата Каримова, Шир-Мухамедова чĕнсе илтĕм те вĕсене: вăйсене пухас пулать те таткăланах ĕçлеме тытăнас пулать,—тесе каларăм.

Çакна май террор çинчен сӳтсе-йаврăмăр та—террор пире халь нимĕнле усă та памасть,—тесе йышăнтăмăр.

Вышинский. Халлĕхе памасть?

Икрамов. Унчухне епĕр терроррла ĕçсем тума йышăнмарăмăр, вăйсене пухмала та çав епĕ каласа пана программăран тухмаламар,—тесе шутларăмăр.

Вышинский. Тӳрĕ кăмăллă граждансенчен, сире тăрă шыв çине кăларса палăртакансенчен хăвăра картлас тесе, есĕр мĕнле мерăсем йышăнма шутланă? Абид Саидова мĕн пирки вĕлертĕр?

Икрамов. Абид Саидов тӳрĕ кăмăллă çын пулман. Епĕ шансах тăратăп: вăл тĕрмене лекнĕ пулĕччĕ, йе ăçта та пулин тарнă пулĕччĕ. Вăл ĕлĕк басмачсене организацилекенни пулнă.

Вышинский. Сирĕн шухăшпа вăл ларнă пулĕччĕ, есĕр ĕнтĕ ларатăр. Вăл тӳрĕ кăмăллă пулман тесе ан та калăр пире. Мĕншĕн вĕлернĕ пулнă ăна?

Икрамов. Вăл „Милли Истиклял“ организацине тăрă шыв çине кăларса палăртнăшăн.

Вышинский. Урăхла каласан, сирĕн контрреволюцилĕ организацине?

Икрамов. Çапла.

Вышинский. Апла пулсан, вăл тӳрĕ кăмăллă граждании пек тунă?

Икрамов. Пулма пултарать.

Вышинский. Мĕнле-ха ку „пулма пултарать“? Епĕ шутлатăп, вăл тӳрĕ кăмăллă çын тунă пек тунă, контрреволюцилĕ организацине тăрă шыв çине кăларнă. Вĕт, вăл çавăншăн вилнĕ?

Икрамов. Çапла.

Вышинский. Совет влаçĕшĕн вилнĕ?

Икрамов. Çапла.

Вышинский. Вăл тӳрĕ кăмăллă етем мар тесе калама мĕнле пултартăр-ха есĕр? Есĕр çавăн пек ыйту çинчен, сирĕн организацине тăрă шыв çине кăларнине хирĕç мĕнле мерăсемпе кĕрешмели çинчен сӳтсе-йавнă-и? Ку тĕлĕшпе мĕн тума йышăнтăр есĕр?

Икрамов. Ку ыйтува епĕр сӳтсе-йавса çакăн пек решени йышăнтăмăр: йурăхсăр çынсене хĕсĕрлесе пырас, ĕçрен хăваласа кăларса йарас, вĕсем пире кансĕрлеме ан пултарччăр,—терĕмĕр.

Вышинский. Çакăн пек провокаторла тактика çине хăçан куçна есĕр?

Икрамов. 1931 çулта.

Клас кĕрешӳвĕ çивĕчленсе пынă май Узбекистанра çĕнĕ ыйтусем тухса тăчĕç, сăмахран, коллективизаци çинчен. Зеленский кăтартса панине урăх сăмахсемпе ăнлантарса парса, епĕ çакăн пек кăтарту патăм: Узбекистан вăл—çĕрмамăклă район, йалхуçалăхлă район, çавăнпа коллективизаци тĕлĕшпе пирĕн Совет Сойузĕнчи малта пыракан районсенчен кайра тăрса йулма йурамасть. Çапла тунипе чылай районсенче колхозсене хирĕç массăлă выступленисем пулчĕç.

Вышинский. Урăхла каласан, ку провокацилĕ лозунг пулнă?

Икрамов. Çапла, ку провокацилĕ лозунг пулнă. Дехкансем çине çапни пулнă. Çавăн пекех коллективизаци çине çапни тата хресчен хуçалăхне аркатни пулнă. Малашне, пусуçаварнăшне пăсас тесе епĕр çакăн пек директива патăмăр, ун тăрăх шăварса акмали çĕр талкăшĕсем çине çĕр мамăкне çеç акмала. Çакăн пирки вара выльăхсем апатсăр тăрса йулнă тата дехкансене те хăйсене валли апатсимĕç тата бахча культурисене акма паман. Епĕ кунта дыньăсем, арбузсем, сухансем, чĕкентĕр тата ытти питех те кирлĕ культурăсем çинчен калатăп. Çаксем дехкансене тăрăхмала турĕç.

Вышинский. Çак тăрăхупа мĕнле усă куртăр есĕр?

Икрамов. Ку тăрăхтару ӳссе кайма пултарайман. Пĕр çулне епĕр туса пынă, анчах та тепĕр çулне партипе совет влаçĕ пире уншăн пуçран çапнă тата ăна турлетнĕ.

Халĕ ĕнтĕ епĕ пирĕн националисла организаци сылтăмрисен центрĕпе йепле майпа блок туни çинчен калас тетĕп. Мана сылтăмрисем патне йавăçтарма тăчĕç, сылтăмрисемпе пĕрле ĕçлекенĕ туса хума 1931 çултах хăтланчĕç. Çакăн пирки мана икĕ хутчен А. П. Смирнов патне дачăна пыма чĕнчĕç.

Ку тапхăрта мана йавăçтараймарĕç тата блок та туса хураймарĕç. Сылтăмрисемпе тӳррĕмĕнех контрреволюцилĕ çыхăну тытма епĕ 1933 çулта Ташкентра пуçланă. Бухарин Вăтам Азине канма пычĕ. Унччен епĕ унпа туслă пулман. Вăл ман пата пычĕ те пĕр 7 йе 8 кун ман патра хватерте пурăнчĕ. Унпа епĕр ухутана, дачăна кайаттăмăр, йаланах пĕрле пулнă. Малтан Бухарин коллективизаци çинчен калаçу пуçласа йачĕ: кивĕ, пурте пĕлекен, Бухаринăн хресченсене вăрçăлă-феодаллă йĕркепе експлоатацилеççĕ, текен тезисне тепĕр хут каласа пачĕ. Колхозсене барщинăпа танлаштарчĕ. Унтан Бухарин çапла каларĕ: партипе совет влаçĕ тĕрĕс мар çулйĕр тытса пыраççĕ, индустриализаци кирлĕ мар, индустриализаци вилĕм патне илсе пырать,—терĕ.

Çакăнпа пĕрлех тата çапла каларĕ: кайа тăрса йулнă колонилĕ çĕршывсем малта пыракан пролетариат пулăшнипе капиталисăм тапхăрне пурăнса иртермесĕрех социалисăм патне пыма пултараççĕ, текен Ленин тезисне ĕненместĕп,—терĕ. Бухарин çапла тесе шутларĕ: Вăтам Азири республикăсенче ку пулма пултараймасть, вĕсене обйазательнă капиталисăмăн йĕркелĕн аталанса пыракан тапхăрне пурăнса иртерме килет,—терĕ.

Вышинский. Урăхла каласан, вăл Узбекистанра капиталисăма кайала тавăрма хушнă?

Икрамов. Çапла, шăпах çавăн пек Епĕ унпа килĕшрĕм. Çапла вăл мана хăйсен çынни туса хучĕ. Бухарин манран: „Есĕ килĕшетĕн?“,—тесе ыйтрĕ. „Килĕшетĕп“. „Пиренпе пĕрле ĕçлеме пулатăн“. „Пулатăп“,—тетĕп. Епĕ ăна: епĕ контрреволюцилĕ етем пулса тăни, пайаптан кăна мар, епĕ çĕнĕ çын мар, сирĕнни пек контрреволюцилĕ организацин руководителĕ,—терĕм. Епĕ хам йертсе пыракан организаци çинчен каласа кăтартрăм та унтан епĕр малашне пĕрле ĕçлесси çинчен калаçса таталтăмăр. Унтан мана: сирĕн тактика мĕнле,—терĕ. Епĕ: вăйсене пухасси тата контрреволюцилĕ переворот тăвасси,—терĕм. Тĕп тĕллев — Узбекистана Совет Сойузĕнчен татса илесси. Вăл: сирĕн вăл вак-тĕвек средствăсем, тесе каларĕ. Есĕр совет влаçĕшĕн йăвăр самант килсе тухасса кĕтетĕр, унчухне тин есĕр ĕçлеме пуçлас тетĕр. Çук, халех ĕçлес пулать. Сирĕн Узбекистана татса илес тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене епĕр ырлатăп. Ку ыйту тĕлĕшпе сылтăмрисен Украина националисĕсемпе, Белоруссии националисĕсемпе тата ытти республикăсенчи националисемпе калаçса татални пур. Çапла вара епĕр политика йенчен пĕтĕмпех калаçса таталтăмăр,—терĕ. Унчухне Бухарин пирĕн ума чылай задачăсем лартрĕ. Пĕрремĕш ыйту—сăтарлă ĕç, иккĕмĕш ыйту—кулаксен восстанийĕ. Вăл: кулаксене организацилес пулать, тĕн сĕрĕмĕпе усă курас пулать, чиркӳ çыннисене йавăçтарас пулать, çапла май та вара повстанчествă организацине тумала,—тесе каларĕ. Сăтăрла ĕç тĕлĕшпе илсен, малтанах вăл кăтартса каланине епĕ ăнлансах илеймерĕм. Епĕ çакăнтан хăрарăм: епĕр хамăр—йертсе пыракансем — сăтăр тăватпăр пулсан, ыран вара халăх: хăвăр ларăр,—тесе калĕ. Вăл çапла ответлерĕ: есĕр мĕн туни çинчен калĕç тесе шутлатăр пулсан, есĕр вара ухмахсем,—терĕ. Ун пек ĕçе тунă чухне: ку вăл совет влаçĕн линийĕ, уншăн совет влаçĕ айăплă тесе калас пулать,—терĕ. Ку вăл халăха совет влаçĕнчен сирме пулăшать,—терĕ.

Епĕ килĕшрĕм. Малашне вăл çапла каларĕ: сылтăмрисен программинче террор çинчен те ыйту тăрать,—терĕ. Унтан вăл: диверсилĕ çĕмĕрсе аркатмала ĕç обйазательнă кирлĕ,—тесе кăтартса пачĕ. Акă ĕнтĕ, вăл лартнă задачăсем.

Вышинский. Епĕ Бухаринран ыйтас тетĕп. 1933 çулта есĕр Икрамовпа курса калаçнă-и?

Бухарин. Пулнă, 1933 çулта епĕ ун патĕнче темиçе кун хушши пурăнтăм.

Вышинский. Ăна контрреволюцилĕ организацине чи пирвай йавăçтарнă?

Бухарин. Тĕрĕс.

Вышинский. Совет влаçĕпе кĕрешме?

Бухарин. Тĕрĕс.

Малашне Икрамов çакна кăтартса парать: кайранхи çулсенче те унăн контрреволюцилĕ ĕçе мĕнле çулпа туса пырасси çинчен Бухаринпа калаçнисем пулнă.

Икрамов. Чи кирли çак калаçу пулнă: мĕншĕн-ха сирĕн икĕ ушкăн Файзулла Ходжайевăн тата Икрамовăн. Сирĕн пĕрле ĕçлес пулать, терĕ Бухарин.

Вышинский. Пурăна киле есĕр Худжайевпа калаçса таталтăр-и? Ходжайевпа сойуз турăр-и?

Икрамов. Çапла.

Вишинский. Ходжайев, ку тĕрĕс-и?

Ходжайев. Епĕ çакна каласшăн: 1933 çулччен, Бухаринпа калаçиччен, пирĕн унпа килĕштерсе ĕçлени пулман тесе, Икрамов тĕрĕсех каламасть.

Вышинский. Килĕштерсе ĕçлени сем пулнă-и?

Ходжайев. Пулнă. 1926—27 çулсенче пирĕн Икрамовпа килĕштерсе пĕрле ĕçлени пулман, анчах 1928 çултанпа епĕр пĕрле ĕçленĕ.

Вышинский. Мĕнле ĕç тĕлĕшпе?

Ходжайев. Сăтăрла ĕç тĕлĕшпе. Урăх шухăш хушмастăп епĕ вăл сăмахсене. Икрамов тĕрĕс каласшăн мар, вăл Бухарин хĕснĕ хыççăн кăна 1933 çулта сăтăрла ĕç позицийĕ çине тăтăм тата манпа пĕрле ĕçлерĕм,—тет. Капла каланипе вăл, националисла организацине йертсе пыракансем хăйсен айăпне Каримов çине йавантарма тăнă пекех, айăпăн пĕр пайне хăй çинчен сирме хăтланать.

Вышинский. Çапах та сирĕн контрреволюцилĕ вăйсене пĕрлештерес ĕçре Бухарин мĕнле те пулин роль йышăнна-и?

Ходжайев. Çапла.

Вышинский. Мĕнле роль?

Ходжайев. Çапла ăнланмала: пирĕн Икрамовпа иксĕмĕр хушăра 1928 çултан пуçласа пĕрлĕхлĕ ĕç, сăтăрлă ĕç пулнă пулсан та, анчах Узбекистанра хамăр шухăшсене парса тăрассишĕн кĕрешни хăшпĕр чухне çак совета хирĕçле ĕçе ăнаслăн тума чăрмантарнă. Çаван пирки те, малтан Бухарин, унтан Антипов Икрамовпа пĕрлешме хушрĕç. Вĕсем: сирĕн пĕрле ĕçлемеле, кĕрешӳве пĕрле туса пымала,— тесе каларĕç.

Вышинский. Кама хирĕç?

Ходжайев. Совет влаçне хирĕç, партине хирĕç, парти руководствине хирĕç.

Вышинский. Ку тĕрĕс-и, айăпланакан Икрамов?

Икрамов. Тĕрĕс.

Вышинский. Ходжайев сирĕн контрреволюцилĕ вăйсене пĕрлештерес ĕçре Бухарин калама çук пысăк роль йышăнна тесе каланине есĕр çирĕплететтĕр-и?

Икрамов. Ну, валлах. Ходжайев 1925—1928 çулсем хушшинче унан лапка пулнă, çынсем пулман,—тет. Пирĕн халăх комиссарĕсенчен ытларахăшĕ пантуркиссемпе националиссем пулнă: Хидыр Алийев, Ходжибайев, Курбанов тата ыттисем те. Вĕсем йалтах Файзуллапа çыхăннă çынсем пулнă.

Вышинский. Мĕнле роль пулнă-ха Бухаринăн?

Икрамов. Мĕншĕн сирĕн икĕ ушкăн? тесе каларĕ Бухарин. Сирĕн пĕрлешмеле,—терĕ. Унчухне епĕ татăклă ответ памарăм. 1934 çул вĕçенче пирĕн пата Антипов пычĕ. Вăл мана çапла каларĕ: сылтăмрисен центрĕ хушнă тăрăх, пирĕн икĕ организацине çине тăрсах пĕрлештермеле, пур ыйтусем тĕлĕшпе те калаçса татални пулмала тата выступленисене пĕрле тумала,—терĕ. Тройка пухăнчĕ— Антипов, Ходжайев, Икрамов. Епĕр пирĕн организацисен ĕçне пĕрле туса пымала тавас тĕлĕшпе калаçса таталтăмăр.

Вышинский. Айăпланакан Ходжайев, басмач Максум пирки мĕн калама пултараттăр есĕр?

Ходжайев. Максум Ревком çумĕнче милици отрйачĕн начальникĕ пулнă. 1921 çулта Бухарăра ăна епĕр хĕçпăшалсăрлантартăмăр, анчах та вăл тарчĕ. Часах тытса суд тунă. Ку вăл басмачсен ориентацине йышăннă хыççăн пулчĕ.

Вышинский. Кам йышăннă пулнă?

Ходжайев. Епĕр.

Вышинский. Есĕр ăна ответ тытассинчен пăрănма пулăшнă-и?

Ходжайев. Ăна амнистипе каçарнă.

Вышинский. Есĕр Енвер-Пашăпа курăнса калаçнă-и?

Ходжайев. Епĕ виçĕ хутчен курса калаçнă. Бухарăра икĕ хут— официаллă калаçусем, тепре хам патăмра хватерте, анчах кайранхинче официаллă калаçусем пулман.

Вышинский. Ку курнăçун тĕллевĕсем?

Ходжайев. Йулашки курнăçун тĕллевĕ çакăнта пулнă: Енвер-Пашан Совет Сойузĕ тĕлĕшпе Бухара правителствин мĕнле линитытса пымали çинчен тăратнă сĕнӳне та а ку тĕлĕшпе мĕнле тактика кирли çинчен сӳтсе-йавасси пулнă.

Вышинский. Çав курнăçусем çинчен есĕр совет правителствинчен пытарнă?

Ходжайев. Паллах ĕнтĕ.

Икрамов. Халь тата малала. Антипов тӳррĕмĕн йертсе пынипе, сылтăмрисен центрĕ хушнипе икĕ националисла организацине те блок туса хутăмăр. Антипов Германипе Йапони ориентацийĕ çинчен нимĕçсемпе тата йапонецсемпе çыхăну тытни çинчен кала а пĕлтерчĕ. Çавăн пекех вăл çар ушканĕ пурри çинчен тата вăрçăмĕн пулсан вĕсем интервентсен наступлени тăвакан вăйĕсене фронт уçса парассипе ĕçлесси çинчен каласа пачĕ. Унчухнех вăл çапла каларĕ: пирĕн те ĕçлес пулать,—терĕ.

Бухаринпа иккĕмĕш хут курнăçнă чухне Антиповпа тăтăшах çыхăнса тăма йышăнтăмăр. Манран вăл ĕçсем мĕнле пыни çинчен ыйтрĕ. Епĕ ăна: хăшпĕр сăтăрла ĕçсене туса пыратпăр,—терĕм. Вăл: кунпа йертте çителĕклĕ мар, сарса пырас пулать, ĕçлес пулать, вăхата ахаль иртерме йурамасть,— терĕ.

Виççĕмĕш курнăçу Англипе çыхăну тытас ыйтупа пулчĕ, ун çинчен ĕнер Файзулла каласа пачĕ. Чăнах та 1936 çулхи октăбĕрте Файзулла Ходжайев мана çакăн çинчен пĕлтерчĕ: Бухарин унпа калаçнă, Бухарин Йевропăри çĕршывсенчи, уйрăмах фашисла государствăсенчи капиталисăмлă стабилизаци çине пит савăнса пăхать. Вăл тата Англирен пулăшу кĕтесси çинчен каларĕ. Чăнах та ку пысăк ыйту, 1936 çулхи октăбĕр уйăхĕн вĕçĕнче йе декабĕр уйăхĕн пуçламĕшĕнче епĕ ун çинчен Бухаринран ыйтрăм. Вăл ĕнентерсе ответлерĕ.

Вышинский. Бухарин ĕнентерсе ответлерĕ?

Икрамов. Çапла.

Вышинский. Куна вăл ăçта каларĕ?

Икрамов. Ку вăл Советсен Сийезĕнче 1936 çулхи нойабĕрте йе екебĕр уйăхен пуçламĕшĕнче. Сийес вăхатĕнче Бухаринпа епĕ пусма çинче тĕл пултăм, никам та çукчĕ, епĕ çавăн çинчен ыйтрăм. Вăл ĕнентерсе ответлерĕ, вăл тата çапла майлаштарса каларĕ: халь вăрçă пулмасан, часах интервенци пулмасан—пирĕн ĕç вара капут,—терĕ. Пире пурне те тытса пĕтерме пултараççĕ, вăрçа хăвăртлатас ыйтува Англи пирки татса пама пултараймастпăр, мĕншĕн тесен вăл хăшпĕр тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери арбитр пулса тăрать. Вăл халь хăш йенне те пулин çавăрăнса пăхма шутламасть пулсан, мĕн патне те пулин пымасть пулсан унсăр вăрçă пулмасть. Палла,—тесе калать Бухарин,—англичансем Туркестан çине илĕртсе тăракан çимĕç таткă çине пăхнă пек пăхаççĕ. Çакăн пек сĕнӳ пулсан вара англичансем, тен, часах Совет Сойузне хирĕç кĕрешме агрессор йенне куçĕç,— терĕ.

Акă мĕншĕн епĕ, Файзулла Ходжайев Англирен пулăшу кĕтесси çинчен пĕлтерсен, ĕненгĕм. Террор пирки мана Антипов каласа пачĕ. Вăл çапла каласа мухтанчĕ: сылтăмрисем кама вĕлерме палăртнă, вăл Вăтам Азине çитеймĕ,— терĕ.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн националисла контрреволюцилĕ организаци хăйĕн планне, программине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе мĕн туни çинчен калама ирĕк парăр. Бухарин ĕçе активлăн туса пымашкăн сăмах тĕксе каланă хыççăн, епĕ хам сăтăрла акт турăм.

1935 çулта епĕр—епĕ, Любимов тата Файзулла Ходжайев пĕрле Любимовпа Икрамов иккĕшĕ алă пусса (Файзулла алă пусман пулас) Сойуз правителстви кăтартса пана стандартран та нӳрĕрех çĕрмамăк йышăнмала тесе директива патăмăр, çапла тунипе 14 пин тонна çĕрмамăкĕ пĕтрĕ тата темиçе мĕлйун тенкĕ убытка пулчĕ. Каракуль йышши сурăхсене ĕрчетес çĕрте сăтăрла ĕç тунă. Епĕр ăна хамăр тӳррĕмĕнех туман, пирĕн организаци членĕсем урлă тунă. 1936 çулта çав сурăхсене тĕрĕс пăхманнине пула вĕсен суртлăхĕ 27 процент чакнă. 1937 çулта каракуль сурăхсен тирĕсене тунă чух вĕсене массăлăн пăсса пĕтернĕ—массăлăн çунтарса йанă. Çакна та пирĕн организаци членĕсем тунă (унта Сата Ходжайев ĕçленĕ).

Ташкент тата Бухарă хулисен коммуналлă хуçалăхĕнче те сăтарла ĕç тунă Ташкентра пирĕн организаци членĕ Таджийев ĕçленĕ— вăл планировани, канализаци, строителства йенĕпе сăтăр тунă.

Бухарă хулин коммуналлă хуçалăхĕнче те сăтарла ĕçе туса пынă. Хулана ишĕлтернĕ, çуртсене сутнă. Хула çыннисене тӳлеме пултармала мар пысăк налогсем тӳлеттернĕ, вĕсем çурчĕсене пăрахапăраха хăварнă, кайран вара вăл çуртсене сутнă.

Сойуз правителстви районри строителства валли панă укçатенкĕсене йурийех салатса, вырăнсăр çĕре йарса пĕтертĕмĕр. Туса пĕтермен строителства 1937 çулта 34 мĕлйун тенкĕ шутланать.

Вышинский. Повстанчествă отрйачĕсем организацилес тĕлĕшпе мĕн тунă есĕр?

Икрамов. Епĕр директива панă. Татаклăн мĕн туни мана паллă мар. Анчах та Балжабайев çапла каласа кăтартрĕ: ăна Алмасов Маргеланск районĕнче ку ĕçе тума тытăнни çинчен, тата унăн хăшпĕр кадрсем пурри çинчен пĕлтернĕ. Унтан Файзулла мана Бухарăра та ку ĕçе тума хатĕрленеççĕ тесе пĕлтерчĕ. Акă манăн Совет влаçĕ умĕнчи преступленисем.

Вĕсене пĕр çĕре пухса итог тума йурать пулсан, епĕ çакна каласа парăп. Манăн преступленисем вăл—социалисăмлă тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутанни, совет халăхне, чи малтан мана тăрантарса ӳстернĕ, Узбек халăхне пăрахса тăшмана сутăнни пулать.

Айăпланакан Бухарина допрос туни*)

Председател Ульрих. Айăпланакан Бухарина допрос тума пуçлăпăр. Айăпланакан Бухарина пĕрремĕш ыйту: малтанхи следствире совета хирĕçле ĕç çинчен хăвăр кăтартса панисене çирĕплететтĕр-и есĕр?

Бухарин. Епĕ хам кăтартса панисене пĕтĕмĕшпех йăлтах çирĕплететĕп.

Вышинский. Хăвăра мĕн пирки айăплă тесе йышăннине кĕскен каласа парăр.

Бухарин. Пĕрремĕшĕнчен, контрреволюцилĕ „сылтăмла-троцкисла блокра“ тăнăшăн. Тата кунччен малтан 1928 çултан пуçласа сылтăммисен контрреволюцилĕ организацинче тăнăшăн хама айăплă тесе йышăнатăп. Епĕ çак „сылтăмла-троцкисла блокăн“ пысăкран та пысăк лидерĕсенчен пĕри пулнă, çакăншăн хама айăплă тесе йышăнатăп.

Вышинский. Çак контрреволюцилĕ организаци хăйĕн умне мĕнле тĕллевсем лартнă?

Бухарин. Çак контрреволюцилĕ организаци, кĕскен калас пулсан...

Вышинский. Çапла, халлĕхе кĕскен.

Бухарин. Вăл, тĕрĕссипе каласан, хут, мĕнле калас, тен, çителĕклĕ ăнланса илмен тата мĕн пур пăнчăсене „и“ тăрне лартман, вăл контрреволюцилĕ организаци хăйĕн умне ССР Сойузĕнче ĕлĕкхи пек тепĕр хут капиталисăмлă йĕркесем туса хурас тĕп тĕллев лартнă.

Вышинский. Совет влаçне сирпĕтсе антарасси?

Бухарин. Совет влаçне сирпĕтсе антарасси—вăл çак тĕллеве пурнăçа кĕртмели меслет пулнă.

Вышинский. Мĕнпе усă курса?

Бухарин. Совет влаçĕн çулĕ çинче тĕлпулакан мĕн пур йа вăрлăхсемпе усă курса, уйрăмăн илсен, умра пурпĕрех пулмала пек тăракан вăрçăпа усă курса.

Вышинский. Вăл вăрçă кам пулăшнипе умра пурпĕрех пулмала пек тăнă?

Бухарин. Йутçĕршыв государствисем йенчен пулăшнипе.

Вышинский. Татăклă калас пулсан, чылай уступкăсем тунă условисемпе. Территорилĕ уступкăсем тарăхах.

Вышинский. Урăхла каласан?

Бухарин. Мĕн пур пăнчăсене „и“ тăрне лартас пулсан—ССР Сойузне татăкăн-татăкăн пайлас условисемпе.

Вышинский. ССР Сойузĕнчен облаçсемпе республикăсене татса илесси?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Сăмахран?

Бухарин. Украинăна, Приморйене, Белоруссине.

Вышинский. Кама усă тума?

Бухарин. Германине усă тума, Йапонине усă тума, кăштах—Англине. Тĕрлĕрен тавлашусем хыççăн сăтăрлама йышăннă.

Вышинский. Çапла вара, оборонă пултарулăхне хавшатас, ишĕлтерес ориентаци пулнă?

Бухарин. Формальнă апла пулман, анчах тĕрĕссипе илсен çаплах пулнă.

Вышинский. Диверсилĕ актăсем çинчен есĕр çавăн пекех калама пултараттăр-и?

Бухарин. Епĕ пуринчен ытла пĕтĕмĕшлĕ руководствă проблематикипе тата идеологилĕ йенĕпе ĕçленĕ, анчах, паллах, ĕçен практикăлă йенĕ тĕлĕшпе те епĕ пĕлсе тăнă, хам йенчен чылай практикăлă утăмсем те тунă.

Вышинский. Айăпланакан Ходжайев, сăтăрлассине вăйлатасси çинчен есĕр Бухаринпа калаçни пулнă-и?

Ходжайев. 1936 çулхи августра манăн дачăра, епĕ Бухаринпа калаçнă чухне, пирĕн нацилĕ организацисенче сăтăрлас ĕç йапах пулса пырать, тесе кăтартса пачĕ вăл.

Вышинский. Мĕн тумала пулнă-ха вара?

Ходжайев. Сăтăр тăвассине вăйлатмала, вăйлатмала çеç те мар, тата повстанчествă, террор т. ыт. организацилеме пуçламала.

Вышинский. Есĕр повстанчествă йухăмне организацилес задачă лартнă-и?

Бухарин. Повстанчествă ориентацийĕ пулнă.

Вышинский. Ориентаци пулнă? Есĕр Слепкова Çурçĕр Кавказа çак ĕçе организацилеме йанă. Йаковенкăна есĕр Бийска çав тĕллевпех йатăр-и?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Апла пулсан „сылтăмла-троцкисла блок“ ĕçĕнче те повтанчествă йухăмне организацилесси пулнă?

Бухарин. Пулнă.

Вышинский. Блокăн терроррла актăсем организацилес, партие совет правителствин руководителĕсене вĕлерес установка пулнă-и?

Бухарин. Вăл пулнă, тата епĕ çапла шухăшлатăп, вăл ориентаци 1932 çул тĕлнеле, кĕркунне пулнă.

(Малалли 4-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограмма.

Совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок“ процесĕ

Айăпланакан Бухарина допрос туни

(Малали. Пуçламĕшĕ 3-мĕш страницăра)

Вышинский. Сергей Миронович Кирова вĕлерне çĕре есĕр хутшăнни? Ăна та „сылтăмла-троцкисла блок“ пĕлсе тăрсах тата вăл кăтартса панă тăрăхах вĕлернĕ-и?

Бухарин. Кун çинчен епĕ пĕлмен.

Вышинский. Айăпланакан Рыков, Сергей Миронович Кирова вĕлерни пирки есĕр мĕн пĕлеттĕр?

Рыков. Сылтăммисем тата блокăн сылтăм пайĕ Кирова вĕлерне çĕре нимĕнле хутшăнса ĕçлени çинчен те пĕлместĕп епĕ.

Вышинский. Есĕр Йенукидзепе çыхăнулă пулнă-и?

Рыков. Йенукидзепе? Пит сахал.

Вышинский. Вăл „сылтăмла-троцкисла блокра“ тăнă-и?

Рыков. 1933 çултанпа тăнă.

Вышинский. Айăпланакан Йагода, кунта халĕ айăпланакан Рыков каланă Йенукидзе блокăн сылтăм пайĕ пулнă тата Сергей Миронович Кирова вĕлерессине организациленĕ çĕре тӳррĕмĕнех хутшăнса ĕçленĕ, çавăн çинчен есĕр пĕлнĕ-и?

Йагода. Рыков та Бухарин та тĕрĕс каламаççĕ. Рыковпа Йенукидзе центр ларувĕнче пулчĕç, унта С. М. Кирова вĕлерес ыйтува сӳтсе-йавнă.

Вышинский. Сылтăммисем çакăнта хутшăннă-и?

Йагода. Тӳррĕмĕнех, мĕншĕн тесен блок сылтăмла-троцкисласкер.

Вышинский. Вĕлерне çĕре, уйрăмăн илсен, айăпланакан Рыковпа Бухарин хутшăннă-и?

Йагода Тӳррĕмĕнех.

Вышинский. Есĕр, „сылтăмла-троцкисла блок“ членĕ, çакăн пек пĕлтерне çĕре хутшăннă-и?

Йагода. Хутшăннă.

Вышинский. Сергей Миронович Кирова вĕлерессине пурнăçа кĕртес тесе есĕр хăвăр мĕнле те пулсан мерă йышăнтăр-и?

Йагода. Епĕ Запорожеца распорйажени патăм. Николайева тытсан..

Вышинский. Малтанхи хут?

Йагода. Çапла. Запорожец килчĕ те, мана: çын тытнă, тесе пĕлтерчĕ...

Вышинский. Унăн портфелĕнче?

Йагода. Револьвер тата дневник пулнă. Вара вăл ăна ирĕке йанă.

Вышинский. Есĕр çакна ырлатăр-и?

Йагода. Епĕ çавна асра тытрăм.

Вышинский. Кайран вара есĕр Сергей Миронович Кирова вĕлерессипе чăрмантармала марри çинчен кăтартусем патăр-и?

Йагода. Çапла патăм...

Вышинский. Бухарина тата тепĕр ыйту. Есĕр террор çине, совет деятелĕсене хирĕç террор тăвасси çине хирĕçле пăхаттăр-и йе майлă пăхаттăр-и?

Бухарин. Епĕ, сылтăмла-троцкисла центăрта пулнăскер, терроралă актсемшĕн тăнă-и, тесе ыйтаттăр есĕр.

Вышинский. Террорлă актсемшĕн.

Бухарин. Тăнă.

Вышинский. Кама хирĕç?

Бухарин. Партице правителствă руководителĕсене хирĕç.

Вышинский. Есĕр çакăншăн тăма 1929—1930 çулсен тĕлнелĕ пуçланă?

Бухарин. Çук, епĕ 1932 çул тĕлнеле пуль тесе шухăшлатăп.

Вышинский. 1918 çулта пирĕн партипе правителствă руководителĕсене вĕлерешĕн таман-и?

Бухарин. Çук, тăман.

Вышинский. Есĕр Ленина арĕслесшĕн тăнă-и?

Бухарин. Арĕс? Çавăн пекки икĕ хутчен пулнă...

Вышинский. Çакă пулнă-и?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Владимир Илйича вĕлерессии çинчен?

Бухарин. Малтанхи хутĕнче 24 сехетлĕхе тытса чарасси çинчен калаçнă.

Вышинский. 1918 çулта Сталин йулташа арĕслеме шутланă—есĕр?

Бухарин. Каллех „сулахай коммуниссен“ çĕнĕ правителствине тăвасси çинчен калаçу пулнă.

Вышинский. Епĕ ыйтатăп, сирĕн 1918 çулта Сталин йулташа арĕслемели план пулнă-и?

Бухарин. Ленина, Сталина тата Свердлова арĕслемели план пулнă.

Вышинский. Ленин, Сталин тата Свердлов йулташсене вĕлерес пирки?

Бухарин. Тем тесен те.

Вышинский. Епĕ судран пайанхи лару пĕтнĕ тĕле йе килес суд ларуне çак ыйту тăрăх свидетелсем чĕнме ыйтатăп: „сулахай коммуниссен“ ушкăнне активлăн хутшăнса ĕçленĕ Йаковлевăна, „сулахай коммуниссем“ текенсен ушкăнне активлăн хутшăнса ĕçленĕ Осинскине, Манцева, унтан тата „сулахай“ есерсене, „сулахай“ есерсен Тĕпком членĕсене Карелинпа Камкова. Вĕсене епĕ Бухаринăн тата „сулахай“ есерсен Ленин, Сталин тата Свердлов йулташсене арĕслес тата вĕлерес план пулнипе пулманни çинчен тата мĕнле план пулни çинчен вĕсенчен допрос тума чĕнтересшĕн.

Председател Ульрих. (Суд членĕсемпе канашланă хыççăн). Государства йенчен айăплакан Йаковлевăна, Осинскипе, Манцева, Карелина тата Камкова свидетел пулма чĕнме ыйтнине суд пурнăçа кĕртме йышăнчĕ.

Айăпланакан Бухарин, есĕр хăвăр совета хирĕçле айăплă ĕç туни çинчен мĕн те пулин калас теттĕр пулсан, пожалуйста, есĕр сăмах илеттĕр.

Бухарин. Тепĕр хут ĕлĕкхи пек капиталисăм туса хурас ыйту çинче чарăнса тăрасшăн. Йурат-и?

Вышинский. Паллах, ку вăл сирĕн тĕп специальнăç...

Бухарин. Епĕ малтанах идейăлă установкăсем çинче чарăнса тăрасшăн. Государства йенчен айăплакан гражданин Раковскине—мĕскер тăвас шутпа „сылтăмла-троцкисла блок“ совет влаçне хирĕç çавăн пек айăплăн кĕрешсе пынă, тесе ыйту пачĕ. Епĕ çак ыйтува ответлесшĕн.

Епĕр пурсăмăр та чи тискер контрреволюционерсем, социалисăмлă тăван çĕршыва сутакансем пулса тăтăмăр, епĕр шпионсем, террориссем, капиталисăм реставраторĕсем пулса тăтăмăр. Епĕр сутăнчăклă ĕç, преступлени турăмăр, тăван çĕршыва пăрахса тăшман йенне куçрăмăр. Епĕр повстанчествă отрйачĕ пулса тăтăмăр, террорлă ушкăнсем организацилерĕмĕр, сăтăр турăмăр, пролетариатăн Совет влаçне сирпĕтсе йарассишĕн пултăмăр.

Манăн программăлă установка ĕçре мĕнле пулмалине калас пулсан, вăл вара економикă тĕлĕшпе государствăлă капиталисăм, пĕччен хуçалăхлă мужик, колхозсене сахаллатни, йутçĕршыв концессисем, тулашри суту-илӳ монополине капиталиссене парасси пулат, результат вара—çĕршыва капитализацилесси.

Пирĕн ĕçри программă çĕршыв ăшĕнче,—калас пулат,—вăл буржуалă-демократилĕ ирĕклĕх патне, коалици патне шăвăнса пырасси, мĕншĕн тесен меншевиксемпе, есерсемпе тата ыттисемпе тунă блокран партисен ирĕклĕхĕ тухса тăрат, а коалици кĕрешме тунă блокран пачах логикăла тухса тăрат, мĕншĕн тесен правителствăна сирпĕтсе антарма хамăра вальли союзниксем шырас пулсан, вара шухăшпа çĕнтерсен тепĕр куннех çав союзниксем влаçа пĕрле хутшăнса ĕçлекенсем пулнă пулĕччĕç. Буржуалă-демократилĕ ирĕклĕхе шăвăнса кĕресси çеç мар, тата политикă йенчен илсен иккĕленмесĕрех цезарисăм елеменчĕсем пур çул çине шăванса кĕресси.

Вышинский. Простă калăр—фашисăм.

Бухарин. „Сылтăмла-троцкисла блокăн“ кулаксем çине тайанас идейăлă орийентаци тата çав вăхăтрах „дворцовăй переворот“ тата государствăра переворот тăвас, вăрçăлă заговор тăвас, контрреволюционерсен преторианла гвардине тăвас, орийентаци пулнă пулсан, ку вара вăл урăх нимĕн те мар, фашисăм елеменчĕсем ĕнтĕ.

Вышинский. Кĕскен каласан, есĕр тӳрех урса кайнă фашисăм патне çитсе тăнă.

Бухарин. Çапла, епĕр мĕн пур пăнчăсене „и“ тăрне лартман пулсан та, ку тĕрĕс.

Халь ĕнтĕ тӳрех хамăн айăплă ĕçсем çинчен каласа кăтартма ирĕк парăр.

Вышинский. Тен, манăн малтан биографи çинч н икĕ-виçĕ ыйту пама йурат-и? Есĕр Австринче пурăннă-и?

Бухарин. Пурăннă.

Вышинский. Нумайччен?

Бухарин. 1912—1913 çулта.

Вышинский. Сирĕн Австри полиципе çыхăнӳ пулман-и?

Бухарин. Пулман.

Вышинский. Америкăра пурăннă-и?

Бухарин. Çапла.

Вышинский. Нумайччен?

Бухарин. 7 уйăх.

Вышинский. Америкăра полиципе çыхăнни пулман-и?

Бухарин. Пачах пулман.

Вышинский. Америкăран Российăна есĕр...

Бухарин. Йапони урлă килнĕ.

Вышинский. Унта нумайччен пурăнтăр-и?

Бухарин. Ерне.

Вышинский. Çав ерне хушшинче йавăçтарса çавăрмарĕç и?

Бухарин. Сирĕн çавăн пек ыйтусем парас килет пулсан...

Вышинский. Уголовлă-процессуалă кодекс тăрăх манăн çавăн пек ыйтусем пама права пур.

Председател Ульрих. Прокурорăн çакăн пек ыйтусем пама ыйтларах та правă пур, мĕншĕн тесен есĕр, Бухарин, 1918 çултах парти руководителĕсене вĕлерме хăтланнăшăн айăпланаттăр, тата есĕр 1918 çулта Владимир Илйич Ленин пурнăçĕ çине алă çĕкленĕ.

Вышинский. Епĕ Уголовлă Кодекс хушшинчен тухмастăп.

Бухарин. Йалтах тĕрĕс.

Вышинский. Полиципе нимĕнле çыхăнусемпе те çыхланман-и?

Бухарин. Пачах та.

Вышинский. Апла-тăк есĕр шпионла ĕç туса пыракан блока мĕншĕн çăмăлланах кĕтĕр?

Бухарин. Шпионла ĕç пирки епĕ пачах нимĕн те пĕлместĕп.

Вышинский. Блок мĕн туса пурăннă?

Бухарин. Кунта шпионаж пирки икĕ çын кăтартса пачĕç—Шарангович тата Иванов, урăхла каласан, икĕ провокатор.

Вышинский. Айăпланакан Бухарин, Рыкова есĕр провакатор тесе шутлаттăр-и?

Бухарин. Çук, шутламастăп.

Вышинский. (Рыкова). Айăпланакан Рыков, „сылтăмла-троцкисла блок“ шпионла ĕç туса пынине есĕр пĕлеттĕр-и?

Рыков. Шпионла ĕç туса пынă организацисем пулнине епĕ пĕлетĕп.

Вышинский. Калăр-ха, Белоруççинчи национал-фашисла организаци, сирĕн „сылтăмла-троцкисла блокăн“ пĕр пайĕ пулса тăраканскер, айăпланакан Шарангович йертсе пыраканскер, шпионла ĕç туса пынă-и?

Рыков. Çапла.

Вышинский. Бухарин пĕлмен-и?

Рыков. Манăн шутпа, Бухарин та пĕлнĕ.

Вышинский. Çапла ĕнтĕ, айăпланакан Бухарин, кун çинчен Шарангович мар, сирĕн тус Рыков калат.

Бухарин. Анчах апла пулсан та епĕ пĕлмен.

Вышинский. Манăн айăпланакан Бухарина ăнлантарса парас килет. Епĕ сирĕнтен Австри пирки мĕншĕн ыйтнине есĕр халь ĕнтĕ ăнланаттăр-и?

Бухарин. Австри полиципе çыхăну тытни епĕ Австри крепаçĕнче ларнинче пулнă.

Вышинский. Айăпланакан Шарангович, есĕр тĕрмере ларнă пулсан та, Польша шпионĕ пулнă-и?

Шарангович. Ларнă пулсан та, пулнă.

Бухарин. Епĕ Швеци тĕрминче ларнă, Российă тĕрминче икĕ хутчен ларнă, Германи тĕрминче ларнă.

Вышинский. Есĕр тĕрмере ларни вăл есĕр шпик пулма пултарманнине ĕнентерсе памаст-ха.

Айăпланакан Рыков, тĕрлĕрен çĕршывсенчи тĕрмесенче ларнă хыççăн Бухарин сирĕнпе пĕрлех Шаранговичăн Польшă разведкипе шпионла çыхăну пулнине пĕлни çинчен ĕнентерсе параттăр-и есĕр? Пĕлнĕ тата çакна ырланă?

Рыков. Шпионла ĕç туса тăракан организацисем çинчен епĕ пĕлнĕ.

Вышинский. Бухарин тĕрлĕрен тĕрмесенче ларни ăна хăй шухăшлă çынсем Польша разведкипе çыхăннине ырлама чăрмантарман. Есĕр çакна ăнланаттăр-и?

Бухарин. Анланатăп, анчах епĕ çакна йышăнмастăп.

Вышинский. Сирĕн контрреволюцилĕ сылтăм организаци хăçан майланса çитнĕ?

Бухарин. Епĕ 1928—1929 çул тĕлнеле Томскипе Рыков çумне сывхартăм, унтан—Тĕп Комитетăн унчухнехи членĕсем хушшинче çыхăнусем тата хыпашласа пăхнисем, вăрттăн канашлусем, вара çакăнтан сылтăм организацине йерттсе пыракан хăйне йевĕр организаци хăвăрт ӳссе пырат.

1930—1931 çулсенче сылтăммисен контрреволюцилĕ организаци ӳсĕмĕнче тепĕр тапхăр пуçланат. Унчухне çĕршывра клас кĕрешӳвĕ пысăккăн çивĕчленсе кайнă, кулаксем саботаж тунă, кулаксем парти политикине хирĕç тăнă т. ыт. Çак тапхăра епĕ пĕтĕм фронт тăрăх „иккĕлĕ бухгалтерине“ куçнă тапхăр тесе шутлатăп. Тройкă вăрттăн центр пулса тăчĕ, çавăнпа та, ĕлĕкрех çав тройкă опозицилĕ çынсен пуçĕ пулнă пулсан, халь вара вăл контрреволюцилĕ вăрттăн организацин центăрĕ пулса тăчĕ.

Çак вăрттăн центр çумне Йенукидзе çывăх пычĕ, вăл çак центрпа Томский урлă çыхăну тытнă. Çавăн пекех тата Угланов та унпа çывăх тăнă.

1932 çулхи кĕркунне тĕлнеле сылтăм организаци ĕçĕнче тепĕр тапхăр пуçланат, тĕллесе каласан: совет влаçне вăйпа ирĕксĕрлесе сирпĕтсе антарас тактикă çине куçни.

Вăйпа ирĕксĕрлесе сирпĕтсе антарас тактикă çине куçасси рӳтинла текен платформăна çырнă вăхăтра пулнă, тесе калатăп епĕ. Ăна рӳтинла платформă тесе арканса кайасран сыхланас шутпа, пытарас тĕллевсемпе калана.

Шăпах çав вăхăтра çакнашкал лару-тăру килсе тухрĕ, вара Троцкин хăйĕн сулахайла тумтирне хывса ыватмала пулчĕ. Ĕç йулашкинчен мĕн тăвасси пирки тĕрĕс кăтартса каласси патне çитсе тăрсан, часах унăн сылтăм платформи палăрчĕ, урăхла каласан, унăн ирĕксĕрех деколлективизаци т. ыт. пирки калама тивнĕ.

Вышинский. Урăхла каласан, есĕр троцкисăма та идейă йенчен хĕçпăшаллантартăр-и?

Бухарин. Йалтах тĕрĕс. Кунта вăйсен виçи çакăн пек пулчĕ: Троцкий кĕрешӳ меточĕсене çивĕчлетсе йарас пирки хĕснĕ, епĕр ăна идеологи йенчен хĕçпăшаллантартăмăр.“ Рӳтинла платформăра совет влаçне вăйпа ирĕксĕрлесе сирпĕтсе антарас тактикă çине куçассине çырса хунă пулнă. Рӳтинла платформăна сылтăм центр йачĕпе апробациленĕ. Рӳтинла платформăна—„дворцовăй переворот“, террор, троцкиссемпе тӳррĕнех çыхăнассине кĕртнĕ.

Председател Ульрих. Çакăнпа лару хупăнат. Çитес лару мартăн 7-мĕшĕнче ирхине 11 сехетре пулат.

Аш-какай хатĕрлес ĕçе хăвăртлатмала

Совет çĕршывĕн социалисăмла йалхуçалăхĕ халь йалхуçалăх продукцине ĕлĕкхинчен икĕ хут ытларах кăларса тăрат. Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тырă туса илме лартнă задачăна пурнăçа кĕртсе çитерме те пирĕн çĕршыв çывхарса çитрĕ. Çавăн пекех социалисăмла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те ӳссех пырат, колхозниксем тата йединоличниксем усракан выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ те ӳсет. Выльăх-чĕрлĕх апачĕн никĕсĕ те çултан çулах çирĕпленсе пырат.

Çаксем ĕнтĕ пурте аш-какай хатĕрлес йенĕпе государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарса пыма май параççĕ, государствăна выльăх-чĕрлĕх сутас ĕçе çăмăллатаççĕ. Кусемсĕр пуçне тата государствăна аш-какай панăшăн колхозсене, колхозниксемпе йединоличниксене государствă пысăк çăмăллăх парат.

Аш-какай йенĕпе тăракан государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарса пырассишĕн тăрăшни вăл пысăк промышлĕннăçлă центрсенчи, столицăри рабочисене тата Хĕрлĕ Çарпа Флот вальли аш-какай тăратассишĕн тăрăшни пулат.

Анчах та республикипе илсен çак ĕç пит кайа йулса пырат. 1937 çулхи плана республикипе 93,2 процент тултарнă. Государствă йенĕпе сутăн илмели плана мĕн пурĕ те 36 процент çеç тултарнă. Çав май 1937 çулшăн государствăна пурĕ 20 пин центнере йахăн аш-какай парса çитереймен.

1938 çулхи план шучĕпе хатĕрлес ĕç те чăтма çук йапăх пырат. 1938 çулти майăн 1-мĕшне хатĕрлеме правителствă панă заданирен мартăн 1 мĕшне мĕн пурĕ те 23 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех 1937 çулхи недоимкăсене шыраса илес ĕç те йапăх пырат, пухса илмелинчен мĕн пурĕ 29 процент çеç илнĕ. Халăх Комиссарĕсен Совечĕ панă вунăкунлăх заданисене районсем тултармасăр ĕçлеççĕ, февраль уйăхĕнчи виççĕмĕш вунăкунлăхри заданирен 8 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Аш-какай хатĕрлес ĕç çавăн пек йапăх пыни чи малтан районсенчи совет тата парти организацийĕсем аш-какай хатĕрлес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхманнинчен тата районсенчи хатĕрлев организацийĕсем оппертивлă ĕçлеменнинчен килет.

Акă, Сентĕрвăрри районне илер. Район иртнĕ вунăкунлăхра 400 центнер вырăнне 16,92 центнер çеç хатĕрлесе панă. Çурçул планне мĕн пурĕ те 11,5 процент çеç тултарнă. Çапла пулсан та районра йалсовет тата колхоз председателĕсен канашлувĕнче мартăн 7-мĕшĕнче çеç çавăн çинчен сӳтсе-йавнă. Сӳтсе-йавни те йатне тунни çеç пулнă.

Сентĕрвăрри районĕнче хатĕрлев организацин аппарачĕ те пĕчĕк мар. Анчах вăл аппарат опперативлă ĕçлесе пымаст.

Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Вăрнар тата Трак районĕсенче те аш-какай хатĕрлес ĕç пит йапăх пырат. Иртнĕ вунăкунлăх хушшинче ку районсенче 2—10 центнершар çеç пухса панă.

Ку ĕçпе тата уйрăмăнах йединоличниксем йулса пыраççĕ. Вăл кашни районрах палăрат.

Çĕрĕç органĕсем те аш-какай хатĕрлев ĕçне хутшăнмаççĕ. ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Эйхе йулташ çĕрĕç органĕсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмели плана тултарса пынипе пĕрлех кашни таварлă фермăра ăратлăха хăварма йурăхсăр выльăхсене суйласа илсе пусма самăртма тăратма хăварма, çав май аш-какай хатĕрлев планне вăхăтра тултарса пымала тума хушнă. Çĕрĕç органĕсем çав ĕç çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ, йурăхсăр выльăхсене браклас ĕç çителĕксĕр пырат.

Районсенчи парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсен колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче массăла-ăнлантару ĕçне вăйлатса йамала. Плана вăхăтра тултарса пынăшăн государствă мĕнле çăмăллăхсем пани çинчен кашни колхоз, кашни колхозник, йединоличник пĕлсе тăтăр.

Большевикла сыхăлăха вăйлатса хатĕрлев организацисенче ĕçленĕ халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене тĕппи йĕрипех çапса хуçмала, сăтăрçăсем халичен тунă сийенлĕ ĕçсен йулашкийĕсене кĕске вăхăтрах тӳрлетсе çитермеле.

Аш-какай хатĕрлев ĕçĕпе государствă йенĕпе выльăхсене сутăн илмели плана вăхăтра тултарса пырасси—вăл политикăла пысăк вырăн йышăнса тăракан ĕç. Çав ĕçе пурнăçа кĕртсе пыма парти, совет тата хатĕрлев организацийĕсен ĕçе большевикла тытăнмала.

Б. Хальавин.

—— о ——

Хамăр пĕлĕве хăпартатпăр

Епĕр, Чăваш республикĕнчен килнĕ красноармейецсем, тăватă çамрăк пĕр ротра вĕренетпĕр.

Хамăр пĕлĕве хăпартас тĕлĕшпе пĕр-пĕрин хушшинче социалисăмлă ăмăрту договорĕ турăмăр. Ăна епĕр кашни пилĕк кунтах тĕрĕслесе пыратпăр.

Йерастов йулташ вĕренӳре пĕтĕм предметсем тăрăх „хорошо“ паллăсем илсе пырат. Ăна темиçе хут благодарност панă. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă кун та Йерастов йулташа чаплă ларура çарпа политикăĕне лайăх вĕренсе пынăшăн 75 тенкĕ укçан премилерĕç, çавăн пекех, айала: „сирĕн ывăлу вĕренӳ отличникĕ“, тесе çырса тăванĕсем патне хăйĕн сăнӳкерчĕкне йамала тӳрĕç.

С. Иванов.

Вăрман хатĕрлев организацисем вăрман хатĕрлессипе турттарас ĕçре ĕçленĕшĕн колхозниксене тĕрĕс мар расчот туса пани çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ç. февралĕн 28-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Тĕрĕслесе палăртнă, вăрман хатĕрлев организацисем ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1937 ç. февралĕн 16-мĕшĕнче (270-мĕш №) вăрман хатĕрлевĕнче тата турттарнă çĕрте ĕçленĕшĕн расчот тăвасси çинчен йышăннă постановленийе пăсса ĕçлеççĕ. Çав постановленийе пăсни—вăрман хатĕрлев организацисем вăрманта ĕçленĕшĕн ĕçукçине колхозниксене хăйсене тӳлеменни пулат,вĕсем колхозниксене тӳлемели укçана банк урлă колхоз правлнийĕн расчотнăй счечĕ çине куçараççĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла йышăнат:

1. Вăрман хатĕрлев организацисене колхозниксене вăрманта ĕçленĕшĕн ĕçукçине банк урлă колхозсен расчетнăй счечĕсем çине куçарса расчот тăвассине чарас.

2. Вăрман хатĕрлев организацисемпе колхозниксене тата колхоз правленисене çакна ăнлантарас:

а) колхозниксем, вăрманта ĕçленĕшĕн кашни уйрăм колхознике, вăрман хатĕрлевĕнче йе турттарнă çĕрте ĕçленĕшĕн договор тунă тăрăх, вăрман хатĕрлев организацисен тӳлемеле;

б) Договор тăрăх лашапа ĕçленĕшĕн вăрман хатĕрлев организацисен кашни колхозник ĕçлесе илекен пĕтĕм ĕçукçинчен 50 процентне тата плана ытлашшипех тултарса пынăшăн прогрессивлă йĕркепе тӳлемешкĕн 40 процентне колхозăн расчотнăй счечĕ çине куçармала.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. СПАСОВ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ Н. ЖУКОВ.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Пахча-çимĕç вăрлăхĕн Чăваш Кантурĕ

Тĕрлĕрен йышши сурт пахча-çимĕç тата тымар-çимĕç вăррисене сутлăх тытат.

Сурт йенчен, шăтас тĕлĕшпе тата тасалăх пирки пысăк шанăç пур.

Хатĕрлев пункчĕсемпе складсем:

Шупашкарта, Канашра тата Çĕрпӳре.

ЛАРЙОКСЕМ: Шупашкарта, Канашра, Çĕрпӳре, Патăрйелĕнче, Улатăрта, Çĕмĕрлере, Сентĕрвăрринче тата Йетĕрнере.

Вăрлăх хакне 50 процент почтăпа куçарнă хыççăн йулашкине вырăнти почтăра тӳлесе илмеле йараççĕ.

Хăвăр хуçалăха вальли кондицилĕ суртлă вăрлăхсене (пахча-çимĕç, тымар-çимĕç вăрлăхĕсем) çителĕклĕ таран илсе хатĕрлĕр!

АДРЕС: Шупашкар, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, Пахча-çимĕç вăрлăхĕн Чăваш Кантурĕ.

Телефон № 57. Расчот счочĕ № 849, Госбанкăн Чăваш республикинчи кантурĕнче.

2-2.

Пĕлтерни

1938 ç. Мартăн 15-мĕшĕнче, Шупашкарти парти вĕренӳвĕн çуртĕнче Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн республикăри сйесĕ уçăлат.

Кун йĕркинче:

1. Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн Республикăри Совечĕ тĕне хирĕçле ĕçсем мĕнле пыни çинчен отчот туса парат.
2. Ревкомиссси отчочĕ.
3. Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн Республикăри Совечĕн руководителĕсене суйласа лартасси.
4. Ревизи комиссси членĕсемпе кандидачĕсене суйласси.
5. Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн Пĕтĕм Союзри сйесне йама делегатсем суйласси.

Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн районсенчи совечĕсен председателĕсен хăйсен делегачĕсене вăхăтра йама тăрăшмала.

Килнĕ делегатсене Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн Чăваш Советĕнче регистрацилеççĕ.—Карл-Маркс урамĕ 18-мĕш № çурт.

Вăрçăлă турăсăрсен Союзĕн Чăваш Совечĕ.

Чирлĕ çынсене йун йама харпăрхăй йунне пама килĕшекенсен

Шупашкар больницине пымала.

Унта хирурги уйрăмĕнче кашни кунах кăнтăрла 2 сехетпе 3 сехет хушшинче йышăнаççĕ.

Йун илни сывлăха сийен тумаст.

Çав сехетрех телефон тăрăх калаçса татăлма пулат—№ 5-40.

2—2

Чăвашсен Йалхуçалăх рабфакне

БУХГАЛТЕР тата канцелйари пуçлăхĕ

кирлĕ

ДИРЕКЦИ

2 1

„Чăваш Коммунĕ“ çыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус, 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 125.Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.